Чебоксарская
Ц. Б. им. Горького
0

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1937 ДЕКАБĔР 24 ЕРНЕКУН
295 (4807)-мĕш №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

19 мĕш çул тухать ● ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ ● Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ:
Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Пенати
ТЕЛЕФОНСЕМ: Редактăрăн 0—67
Ред. заместителĕн 0—88
Редакци секретарĕн 4—40
Дежурнăйăн 6—23

Гектартан 100 пăтран кайа илекен пĕр колхоз та пулмала мар

Кăçалхи йалхуçалăх çулĕн аван итогĕсем, пур тĕрлĕ культурăсемпе те пысăк тухăç илни малашне колхозниксене организаципе хуçалăх йенчен татах та çирĕплеме кирлĕ условисене пурне те туса пачĕç. „Колхозра тÿрĕ ĕçлени, вăйлă тырпулшăн большевикла кĕрешни тата стахановла ĕçлени—колхозниксен материаллă пурнăç условине пит çÿле çĕклентерчĕ". Йалхуçалăх çулĕн çавăн пек лайăх итогĕ колхозниксене çеç мар, пĕтĕм рабочи класа савăнтарать.

Анчах, 1937 çулта вăйлă тырпул туса илни 1938 çулхи тырпулшăн кĕрешессине пĕртте лăплантарма пултараймасть. 1938 çулта пирĕн татах та вăйлă тырпул туса илмелле, килес çулхи тырпулшăн татах та вăйлăн кĕрешмелле. Большевикла кĕрешÿ çеç вăйлă тырпул туса илме май парать.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)Парти Обкомĕ 1938 çулхи çуракине хатĕрлесси çинчен йышăннă постановлени хăшпĕр колхозсемпе МТС тата райçĕрĕç пайĕсен руководителĕсем 1937 çулти çитĕнÿсемпе лăпланса ларни сийенлĕ те хăрушă ĕç пулса тăнине кăтартса, 1938 çулхи çуракине хатĕрленес ĕçре большевикла кĕрешÿ программи мĕнле пулмалине уççăн та татăклăн кăтартса парать.

Пайан куна илсен, 1938 çулхи тырпулшăн кĕрешес ĕç чăтма çук начар пырать. „ПСК(б)Парти райкомĕсем, райĕçтăвкомсем, çĕрĕç органĕсемпе колхоз правленийĕсем колхозниксен ССР Союзĕн Аслă Совечĕ суйланă чухнехи политикăла çĕкленÿпе усă курса колхозниксене çуракине хатĕрленес ĕçе мобилизацилеме пĕлмен". Çав май çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе тумалли ĕçсенчен чылайĕшĕ кайа йулнă.

1938 çулхи çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе кайа йулнине пĕтерме Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)Парти Обкомĕ 1938 çулхи йанвар уйăхĕнче çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе стахановла рекордсен сталинла уйăхлăхĕ ирттерме йышăнчĕ. Çав сталинла уйăхлăхра колхозниксемпе колхозницăсен, республикăри мĕн пур çĕрĕç работникĕсен ĕçре „социализмла организацилĕхпе большевикла йĕркелĕх тĕслĕхĕ кăтартса, пĕр пек тикĕс, ним чăрăнусăр тата штурмовщинăсăр" ĕçлесе çуракине нихăçанхинчен лайăх хатĕрленсе çитмелле.

1938 çулхи йалхуçалăх программи пĕчĕк мар. 1938 çулта кирек мĕнле услови пулсан та, сталинла вăйлă тырпул туса илмелле, „гектар çинчен 100 пăтран кайа илекен пĕр колхоз та пулмала мар". Çав лозунга пурнăçа кĕртме пирĕн пурте—1937 çулхи опыт та, материаллă условисем те пур. Колхозниксем йенчен вăйлă тырпулшăн тăрăшса большевикла кĕрешни тата стахановла ĕçлени çеç кирлĕ.

Республикă тракторсемпе машинăсем, çĕре çемçетмелли минераллă çăнăхсем тата суртлă вăрлăхсем кÿрсе килсе партипе правителстварăн пысăк пулăшу илсе тăчĕ. Трактор паркĕ 1938 çулта татах та нумай ÿсет. Çавăнпа пĕрлех 1938 çулта агротехникăла ĕçсен калăпăшĕ те нумай ÿсмелле. 1937 çулта республикипе пурĕ 86.102 гектар çине йаровизацилесе акнă пулсан, 1938 çулхи план тăрăх 100 пин гектар акмала, 1937 çулта 39 пин гектар çинче калчасене апат панă пулсан, 1938 çулта 50 пин гектар çине апат памала, 1937 çулта 6 мĕлйун лав ытларах тислĕк кăларнă пулсан, 1938 çулта 10 мĕлйун лав кăлармала, 40 пин гектар çинче мулчировани туса ирттермелле, 21.500 гектар çинче интрагинизаципе азотогенизаци тумала тата ыт. те. Çак ĕçсене пурнăçа кĕртме, паллах, халех хатĕрленмелле. Кашни колхозăн, бригадăн тата рекордлă тырпулшăн кĕрешекен звенон агротехникăла ĕçсен планĕ пулмала.

Çавăнпа пĕрлех райкомсемпе райĕçтăвкомсен колхозсенче политикăла тата массăла ĕçе аялăн сарса йарса, „кулленех çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе ĕçлесе пынă, агротехникăла ĕçсен планĕсене пурнăçа кĕртсе пынă вăхăтрах, вăрлăх хывассипе вăрлăхсене хатĕрлес ĕç çине, суртлă вăрлăх акмали плана пурнăçа кĕртесси çине, тракторсемпе кăкармали инвентарсене тата пур тĕрлĕ йалхуçалăх машинисене йусасси çине, МТС-семпе колхозсем валљи кадр (трактористсем, комбайнерсем, бригадирсем, т. ыт. те) хатĕрлесси çине уйрăмăнах çавăрăнса пăхмалла".

Вăйлă тырпул туса илесси çамăл ĕç мар. Агротехникăна алла çавăрса илсе уншăн кĕрешме пĕлмелле. Çавăнпа агротехникăна массăлăн вĕренес ĕç кăçал уйрăмăнах пысăк вырăнта тăмала. Агрокружоксемпе зоокружоксенче тата заочнăй йĕркепе вĕренессине анлăн сарса пынисĕр пуçне Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Обкомĕ Горький облăçĕн опычĕ тăрăх колхоз руководителĕсене малта пыракан колхоза пухса çав колхозăн практикипе опычĕ çинчен вĕренме сĕнеççĕ. Ку вăл пирĕн республикăра колхоз кадрĕсене вĕрентессинче çĕнĕ формă пулса тăрать. Çĕрĕç органĕсен агротехникă вĕренĕвĕн çак формипе туллин усă курма тăрăшмала.

Республикипе колхозсенче 82 процент таран хресчен хуçалăхĕсем пĕрлешсе тăраççĕ. Йединоличниксем 17 процент ытларах шутланаççĕ. Çавăнпа вĕсене колхоза кĕртсе çитерес тĕлĕшпе ĕçленипе пĕрлех, çуракине хатĕрленес ĕçе хутшăнтарасси çине те тимлĕн пăхмала. Çавăнпа та йединоличниксем хушшинче çуракине хатĕрленес ĕçе хакламанни политикăла йăнăш туни пулать.

Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б) Парти Обкомĕ çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе мĕн-мĕн тумаллине конкретлăн кăтартса пачĕç. Пур колхозсемпе совхозсенче, бригадăсенче, трактористсем тата йалхуçалăх специалисчĕсем хушшинче çав постановленийе тата Мускав хулипе облăçĕнчи фабрикăсемпе савăтсенчи стахановецсем чĕнсе каланине сÿтсе-йавса 1938 çулхи сталинла тырпулшăн поход пуçласа йамала. Программă панă. Хаљ ĕнтĕ çанăсене тавăрсах çав программăна пурнăçа кĕртме практикăла ĕçе тытăнмала.

Колхозсен 1938 çулхи приходпа расход сметисем

Йалхуçалăх ертелĕн уставĕ тăрăх пур колхозсен те производствăлă планпа пĕр вăхăтрах ССР Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ тунă формăпа 1938 çул валљи укçа прихочĕпе расхочĕсен сметисене тумала.

ССР Союзĕн Çĕрĕç халăх комиссариачĕн кăтартувĕ тăрăх, приходсемпе расходсен сметисене тума колхоз правленийĕсем выљăх-чĕрлĕх фермисемпе колхоз предприйатисен пуçлăхĕсене, бригадирсене, агрономсене, зоотехниксене тата колхозăн ытти специалисчĕсене те йавăçтараççĕ.

Сметă пройекчĕсене малтанлăха бригадăри пухусенче тата производствăлă канашлусенче анлăн сÿтсе-йаваççĕ, унта колхозниксем палăртнă тÿрлетÿсемпе сĕнÿсене пурне те шута илеççĕ.

Сметă тунă чухне колхозăн ĕçкунĕсем тăрăх валеçмелли укçа тупăшĕсене хушса илмелли тата тупăшсене ÿстермелли пур майсемпе те перекетлесе тата расходсене чакарса, çавнашкалах подсобнăй предприйатисем организациленĕ майсемпе усă кураççĕ.

Сметă пройектине ертел членĕсен пĕрлехи пухувĕнче 1938 çулхи февралĕн 15-мĕшĕнчен кайа йулмасăр çирĕплетмелле. Пухура колхозниксем çурринчен кайа мар пулмала.

Райçĕрĕç пай пуçлăхĕсемпе МТС директорĕсен колхозсене сметă тунă чухне пулăшмала тата сметăсене мартăн 1-мĕшĕнчен кайа йулмасăр тĕрĕслесе пĕтермелле. Сметăра йăнăшсем йе йăнăш шутланине палăртсан, ăна ертел членĕсен пĕрлехи пухувĕнче тепĕр хут сÿтсе-йавмала.

Райçĕрĕç пайĕн пуçлăхĕсемпе МТС директорĕсен колхозсем сметăсене мĕнле пурнăçа кĕртнине çулталăкĕпех хытă тĕрĕслесе тămaлa, правленисен укçасене хăйсем тĕллĕн, сметăпа пăхман статйасем тăрăх расходлама тата çавнашкалах йалхуçалăх ертелĕн уставне пăсма ирĕк памала мар.

(ТАСС).

Стахановла рекордсен сталинла уйăхлăхĕ çинчен

ПСК(б)П Парти Чăваш Обкомĕн бюровĕ 1937 çулхи декабĕрĕн 20-мĕшĕнче йышăннă постановлени

ССР Союзĕн Аслă Совечне суйлас кун умĕн ирттернĕ стахановла рекордсен сталинла вунăкунлăх хушшинче фабриксем, заводсем, промышленнăçăн пĕтĕм отраслисем çĕнĕрен пысăк çитĕнÿсем турĕç. Аслă Совета суйламалли кун тĕлне вуншар предприйатисем хăйсен çулталăк планĕсене срокченех тултарса çитерчĕç. Çĕмĕрлери „Большевик" завод, Вăрнарти фосфорит заводĕ, Улатăрти 7—9—10-мĕш номĕрлĕ йăвăç завочĕсем, спирт промышленнăçĕ тата чылай ытти предприйатисем те çулталăк программисене срокченех тултарчĕç. Пирĕн çĕршыври колхозсем Аслă Совет суйлавне сталинла вăйлă тырпулшăн кĕрешессине вайлатнипе кĕтсе илчĕç.

Мускав хулипе Мускав облăçĕнчи фабрикăсемпе заводсенчи стахановецсем промышленнăçпа транспортри рабочисене, инженерла-техникла работниксене çак çулти государствă планне ăнăçулăн пурнăçа кĕртсе çитерме, 1938 çулти—сталинла виççĕмĕш пйатилеткăн пĕрремĕш çулĕнче промышленнăç производствин планне пурнăçа кĕртме кăтартулă хатĕрленме чĕнчĕç; çав шутпа 1938 çулхи йанвар уйăхĕнче стахановла рекордсен сталинла уйăхлăхне ирттермелле, çав уйăхра социализмла организацилĕхе, большевикла йĕркелĕхе кăтартса, пĕр пек тикĕс, ним чăрăнусăр тата штурмовщинăсăр ĕçлеме пĕлнине кăтартса ĕçлемелле терĕç вĕсем.

ПСК(б)П Обкомĕ ПСК(б)П райкомĕсене тата парти пуçламĕш организацийĕсене стахановла рекордсен сталинла уйăхлăха ирттерес ĕçре йертсе пыракан пулса ĕçлеме хушать. Пур предприйатисенче те рабочисен тата служащисемпе инженерла-техникла работниксен пухувĕсем, колхозсенче — колхозниксен пухувĕсем туса, вăл пухусенче Мускав хулипе облăçĕнчи фабрикăсемпе заводсенчи стахановецсем чĕнсе каланине, тата 1937 çулхи итогсемпе 1938 çулхи план çинчен предприйати директорĕсемпе колхоз председателĕсен доклачĕсене сÿтсе-йавмала.

Йанварĕн 1-мĕшне çитиччен кашни районрах предприйатисенчи стахановецсемпе ударниксен слочĕсене тата йалхуçалăхри стахановецсемпе ударниксен слочĕсене ирттерме хушас.

Предприйати директорĕсене, парткомсене тата ПСК(б)П райкомĕсене декабĕрĕн 25-мĕшĕнчен кайа йулмасăр, стахановла рекордсен сталинла уйăхлăхĕ хушшинче тумалли ĕçсен планĕсене туса çитерсе промышленнăçри тата йалхуçалăхĕнчи стахановецсемпе ударниксем хушшинче сÿтсе-йавмала.

Республикăри тата районри хаçат редакцийĕсене стахановла рекордсен сталинла уйăхлăхне ирттерме хатĕрленес ĕçе тата уйăхлăх мĕнле пулса иртнине хаçатсем çинче сутатса пыма хушас.

ПСК(б)П Обкомĕн секретарĕ
Г. Иванов

Карымскайа—Хабаровск иккĕмĕш çулĕсене тăвакансене наградăлассипе тата љготăсем парасси çинчен

ССР Союзĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă постановлени

Карымскайа—Хабаровск иккĕмĕш çулĕсене туса çитернĕ тата ăна йаланлăха усă курма ĕçе кĕртнĕ май ССР Союзĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çапла йышăнаççĕ:

1. ССР Союзĕн Шалти ĕçсен халăх комиссариатне строителствăра палăрнă хăйсен ирĕкĕпе кĕрешсе ĕçленĕ работниксене хаклă парнесемпе тата укçалă премисемпе наградăлама хушас.

2. Карымскайа—Хабаровск иккĕмĕш çулĕсене тăвакансем валљи кăкăр çине çакма йатарласа знак тăвас.

3. ССР Союзĕн Шалти ĕçсен халăх комиссариатне Инçет-Хĕвелтухăç крайне хăйсен ирĕкĕпе йулса Байкал—Амур магистралĕпе ытти обйектсене тума ирĕклĕн кĕрешнĕ, иккĕмĕш çулсем тунă çĕрте уйрăмăнах палăрнă малтан тĕрмере ларнă çынсен спискине, вĕсене судпа айăпланинчен хăтарма, ССР Союзĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитетне тăратма хушас.

4. Иккĕмĕш çулсем тунă çĕрте ударла ĕçленĕшĕн судпа айăпланисене 10.000 çын таран срокченех ирĕке кăларас. Профессилĕ Союзсен Пĕтĕм Союзри Тĕп Советне вĕсене хăвăртрах ĕçе вырнаçтармали майсем тума хушас.

5. ССР Союзĕн Шалти ĕçсен халăх комиссариатне тĕрмере ларнисене Карымскайа —Хабаровск иккĕмĕш çулсем тунă çĕрте ударла ĕçленĕшĕн ирĕке кăларнă чухне вĕсем иккĕмĕш çул çинче ĕçлени çинчен ĕнентерекен удостоверенисĕр пуçне çул билечĕсем тата 100 тенкĕрен пуçласа 500 тенкĕ таран укçан награда пама хушас.

ССР Союзĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитет председателĕ
М. Калинин.

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ
В. Молотов.

ССР Союзĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитет секретарĕ
А. Горкин.

Мускав, Кремљ.
1937 çул декабĕрĕн 19-мĕш.

Чи лайăх агитаторсем партине кĕреççĕ, вĕсене йертсе пыракан ĕçе лартаççĕ

ЛЕНИНГРАД, декабĕрĕн 22-мĕш. (ТАСС). Ленинград облăçĕнчи районсенче суйлав кампани вăхăтĕнче активиссен, агитаторсен тата пропагандиссен çĕнĕ кадăрсем ÿссе çитĕнчĕç. Парти райкомĕсем халĕ çав актив хушшинче массăлă-политикăлă ĕçе сарса пыраççĕ. Дрегељск районĕнче агитаторсен вунă кунлă курсĕ уçăлнă. Вăл курсра 60 çын вĕренет.

ПСК(б)П Поддорский, Шимский т. ыт. райкомсем те агитаторсем валљи çавăн пек курссемпе семинарсем организацилеççĕ.

Хăйсене агитацилĕ-пропагандăлă ĕçре ĕçлеме пултарнине кăтартнă чи лайăх активиссем парти ретне кĕреççĕ. Дрегељск районĕнчи парти организацийĕ 11 çынна ПСК(б)П кандидатне илнĕ тата кандидатран члена куçарнă. Кандидатран ПСК-б)П членне Звонецк йалсовечĕн клуб пуçлăхне Иегорова йулташа куçарнă. Вăл пропагандисра тата участкăри суйлав комиссин председателĕнче ĕçлесе хăй лайăх организаторпа агитатор пулнине кăтартнă.

Суйлав кампанинче политикă тĕлĕшпе ÿснĕ партире тата партире тăман большевиксене партин, советăн тата хуçалăхăн йертсе пыракан ĕçĕсене лартаççĕ. Шкул пуçлăхĕ Симченко йулташа—Дрегељск районĕнчи Мозалевский суйлав участкин доверенăйне—райсутĕç пайĕн пуçлăхне. Сталинский йалсовет председателне Тихомиров йулташа МТС-ин политикă пайĕпе ĕçлекен директор помощникне. Дементйев йулташа ПСК(б) Партин Дрегељск райкомĕн инструкторне лартнă.

Фабрикăсемпе заводсем стахановла рекордсен сталинла уйăхлăхне хатĕрленеççĕ

Совет çĕршывĕнчи нумай фабриксемпе заводсем Мускаври стахановецсен чаплă пуçарувĕ çумне пĕрлешсе, 1938 çулхи йанвар уйăхĕнче стахановла рекордсен сталинла уйăхлăхне ирттерме вăйлăн хатĕрленеççĕ

Мускаври тата Мускав облăçĕнчи стахановецсем чĕнсе каланине ответлесе Ленинградри атă-пушмак çĕлекен „Скороход" фабрикĕнчи стахановецсем декабĕр уйăхĕнчи плана ытлашшипех тултарма тата йанвар уйăхĕнче ĕç программине кашни цехах срокчен тултарма пулнă. „Скороход" фабрикĕнче стахановла рекордсен сталинла декадă хушшинче çĕр рекорд ытла, вĕсенчен хĕрĕх—Пĕтĕм Союзри тата икĕ—пĕтĕм тĕнчери рекорд тунă (стахановецсем Горелышевпа Двойнов йулташсем). Малта пыракан цехсем фабрикăн мĕн пур цехĕсене ăмăртура чăннĕ.

Горькийри „Новое Сормово" заводри мухтавлă шлифовалљщик Болдырев йулташ, пĕр уйăх кайала 1.242 нормă парса чаплă рекорд тунăскер, стахановла рекордсен сталинла уйăхлăхне хатĕрленсе, çĕнĕ çитĕнÿ тунă. Вăл 338 сехет хушшинче ĕçлемелли ĕçе 26 сехет хушшинче туса пĕтернĕ. Нормăна 1.300 процент тултарнă. Болдырев йулташ вăл кун 800 тенкĕ ĕçлесе илнĕ.

(ТАСС).

Испанири фронтсенче

Республикă çарĕсем Теруеле илни

Декаберĕн 21-мĕшĕнче каçхине республикă çарĕсем çине тăрса хаййаррăн çапăçса фашиссен çирĕп тĕреклетнĕ пункчĕ—Теруел хулине туртса илнĕ Пăлхавçăсемпе интервентсем Теруел районĕнче, Каталонийĕ республикăлă Испанирен уйăрса илес тесе, республиканецсен çапăçу линийе таран савăл пек кĕрсе, малалла, Вăтаçĕр тинĕс патнелле, темиçе хутчен те çĕмĕрсе кĕме тăнă.

Теруелшĕн çапăçнă çĕрте республиканецсем хăйсен питĕ пысăк паттăрлăхне кăтартнă. Фашиссен Теруел патнелле тăсăлнă нумай резервисем темиçе хутчен те контратакă тунă. Вĕсене республиканецсем пурне те сирсе парахнă. Республикă çарĕсен пĕр пысăк колонни пĕр кун кунĕпех нимĕн чарăнмасăр çапăçнă.

Республиканецсем пĕр тĕрлĕ хĕçпăшалсемпе çапăçса пĕр-перинпе таччăн çыхăнтарса усă курма пултарнă. Республикă артиллерийĕ Теруел çине вăйлăн персе тăрса çар тĕлĕшĕнчен паха вырăнта тăракан сооруженисене нумай çĕмĕрсе тăкнă. Республикă авиацийĕ çĕр суммипе айăлтан вĕçсе тăшмана татти-сыпписĕр пулеметсенчен пенĕ. Республиканецсем çăмăл танксемпе усă курса, çурран çара тапăнма чаракан пăлхавçăсен уйрăмăнах çирĕплетнĕ йăвисене çĕмĕрсе тăкнă. Республикăн утлă çарĕ пырса тухсан фашиссем хăраса ÿксе йĕркерен тухса кайнă.

Декабĕрĕн 20-мĕшĕ тĕлне каçпулас умĕн фашиссем хăйсен çапăçува хутшăннă чăсĕсенчи пĕтĕм çарĕнчен хĕрĕх процентне çухатнă.

Республикă çарĕсем хулана кĕрес умĕн пăлхавçăсем хăраса ÿксе пăтранма пуçланнă. Республиканецсем офицер значокĕсене нумай тупаççĕ. Пăлхавçăсен офицерĕсем значокĕсене татса персе, тапăнса пыракан республикă чăсĕсем умĕнче малалла тарса кайнă.

Республиканецсем çĕршер пăлхавçăсене тыткăна илнĕ, вунă тупă, нумай пулеметсем, винтовкăсем тата çар хатĕрĕсем туртса илнĕ.

(ТАСС)

Испани халăхĕ республикă çарĕ чаплă çĕнтерÿ тунине уйавлать

БАРСЕЛОНА, декабĕрĕн 22-мĕш. Теруел хулине туртса илнишĕн Испани халăхĕ мĕн тери хытă савăннине çырса пама çăмахсем те çитмеççĕ. Теруел хулинчи халăх салтаксемпе пĕрле урамсене тапса тухнă. Республикăна тата халăх çарне чысласа саламланисем вĕçĕ-хĕррисĕр илтĕнеççĕ.

Республикă çарĕсем çапăçса илнĕ провинци центрĕсенчен пĕрремĕш центр шутланакан Теруел хулине туртса илни калама çук пысăк вырăн йышăнса тăрать. Фашиссем вăл хуларан никам пырса тĕкĕнейми крепăç туса хунă пулнă, анчах апла пулсан та, ăна пĕр ерне хушшинче туртса илнĕ. Калама çук чаплăн хатĕрленсе ирттернĕ вăрçă операцийĕ тăшманшăн та, тата унăн агентуришĕн—ПОУМ-ри троцкисла шпионсемшĕн те пачах кĕтмен çĕртен пулнă.

Тĕп фронтри (Мадрид патĕнчи) республикă çарĕсен Главнокомандуйушчийĕ Миаха генерал Теруеле туртса илни пирки çакăн пек каласа панă:

„Теруеле туртса илни пĕтĕм тĕнчешĕн пысăк вырăн йышăнса тăрать. Вăл хулана туртса илесси фашиссем çав фронтра вăйлă наступлени тăвасси çинчен пĕлтерне самантра пулса иртрĕ. Теруеле илни халăх çарĕн хăватне кăтартса пачĕ, вăл çар пирĕн çĕре тытса илнĕ мĕн пур йутçĕршыв çарĕсене хирĕç тăма пултарать. Халăх çарĕн салтакĕсем стратеги йенчен паха вырăнта тăракан пункта йышăнчĕç. Испани республикĕ „Итали çарне татах тепĕр поражени турĕ".

Хĕвелтухăç фрончĕн Теруел участкинчи командуйушчине Сарабиа полковнике Теруеле тытса илнĕ чух чаплăн кĕрешнĕшĕн генерал тунă.

(ТАСС).

Испани компартийĕ республикă çарне саламлани

Барселонăран пĕлтернĕ тăрăх, Испанири коммунисла партии, республиканецсем Теруеле тытса илнĕ май, Испани халăхĕн паттăр çарне тата республикă правителствине хĕрÿлĕ салам йанă.

„Аслă çĕнтерÿ умĕнче хĕпĕртесе,—тесе каланă саламра,—епĕр хăйулă боецсене, вĕсен начальникĕсемпе комиссарĕсене, пĕтĕм Испани халăхне саламлатпăр, йутçĕршыв захватчикĕсем хуçа пулса пурăннă Испани хулисенчен пĕрине фашисла чуралăхран хăтарма пултарнă çынсем умĕнче пирĕн парти хăйĕн йалавĕсене тайăлтарса тăванла саламлать".

„Испанири коммунисла партии ирĕке тухнă пиншер тăвансене тата вĕсене хăтарма пултарнă геройсене саламлать, тата пĕтĕм Испани халăхĕпе пĕрле çапла кăшкăрать: Сывă пултăр çĕнтерÿ çарĕ! Сывă пултăр халăх фрончĕ!"

Республикă авиацийĕн чаплă тапăнувĕ

ЛОНДОН, декабĕрĕн 22-мĕш. Англи пичечĕ пĕлтернĕ тăрăх, республикăн тăвата самолљочĕ декабĕрĕн 22-мĕшĕнче Севилйа (кăнтăр Испанин пысăк хули) тата Кадикс (Испанин кăнтăр-хĕвелтухăç хĕрĕнчи пысăк порт) çине тапăнса икĕ хулара та çар обйекчĕсем çине вăйлăн бомбăсем парахнă. Кадикскра самолљотсем вăрçă материалĕсем тийенĕ парохода шыва путарнă.

(ТАСС).

Китайри вăрçă

Китай центрĕнче вăйлă çапăçусем Нанкинран çурçĕр-хĕвелтухăçнелле, Чучжоу хулин районĕнче, çавнашкалах тата Ханчжоу хули (Чжецзйан провинцин столици) çывăхĕнче пыраççĕ.

Çурçĕр Китайра йапонецсен тылĕнче партизансен нумай отрйачĕсем активлăн çапăçаççĕ. Шаљси провинцинче Йапони çарĕсен тылĕнче Китайăн саккăрмĕш револљуцилĕ халăх çарĕн 60 пин боецĕ тата хĕçпăшаллана партизансем пур. Шаљси провинцин çурçĕр-хĕвелтухăç пайĕнчи çирĕм уйесĕнчен йапонецсем тăвата уйеса çеç „тытса тăраççĕ". Ытти уйесĕсем партизансен аллинче.

Йапонецсем кăнтăр Китайа тапăнасса кĕтнĕ май Кантон оборонăна вăйлăн хатĕрленет. Декабĕрĕн 20-мĕшĕнче Кантонра йапонийе хирĕçле вăйлă самооборонă тунипе 120 пин çынлă демонстраци пулса иртнĕ.

(ТАСС).

Чехословаки пичечĕ ВЧК—ОГПУ—НКВД çирĕм çул тултарни çинчен

ПРАГА, декабĕрĕн 22-мĕш. (ТАСС). Чехословаки хаçачĕсем ВЧК—ОГПУ—НКВД çирĕм çул тултарнине паллă тăваççĕ.

Чехословакири коммуниссен партин тĕп органĕ „Руде право" хаçат тата рабочисен массăлă хаçачĕ "Галло новины" çав мухтавлă праçник çинчен йатарласа статйасем пичетлеççĕ. Статйасенче ВЧК—ОГПУ—НКВД работникĕсемпе боецĕсем шпионла ĕçсемпе, сăтăрлăхпа, диверсипе, фашисăмăн троцкисла-бухаринла агентурипе кĕрешес ĕçре револљуцилĕ паттăр, хăйулă тата сыхăлăхлă пулнине паллă тăваççĕ.

Хаçатсем уйрăмăнах ССР Союзĕн чиккисене вичкĕн хураллакан—нарковнудељецсен мухтавлă паттăр отрйачĕсенчен пĕри—совет пограничникĕсем çинчен ытларах çыраççĕ.

„НКВД органĕсен вăйе,—тесе çырать „Руде право" хаçат,—вĕсĕм рабочисемпе, пĕтĕм ĕççыни массисемпе чи таччăн çыхăнвинче йулать, вĕсем пулăшни Шалти ĕçсен халăх комиссариачĕн чаплă ĕçĕн никĕсĕ пулать". Йулашкинче хаçат çапла çырать: „Совет государствă хăрушсăрлăхĕн сыхлăх органĕсем ССР Союзĕн тăшманĕсемпе, лăпкă ĕçĕн тăшманĕсемпе, лăпкă самана тăшманĕсемпе, вăрçа пуçаракансемпе тата фашисăм агентурипе кĕрешеççĕ. Вĕсем ССР Союзĕнче çеç мар, тата унăн инçетри тулашĕнчи—пĕтĕм тĕнчери нумай мĕлйунла ĕççынисен телейĕшĕн кĕрешеççĕ.

Çĕнĕрен ÿсекен агитаторсене ĕçре çирĕплетмеле

Суйлав кампанийĕ малтанхи кунĕсемех коммунистсемпе партире тăманнисен союзĕ хурçă пек çирĕпленсе тăратрĕ. Çак союза çирĕп пулнипе мăй ĕнтĕ, суйлавра коммунистсемпе партире тăманнисен тунă блок чаплă çĕнтерÿ турĕ.

Суйлав пит те хăватлă иртрĕ. Анчах пирĕн çак суйлав кампани вăхăтĕнче тунă пысăк ĕçсемпе хамăрăн малашнехи ĕçсем валли вывăдсем тумалла. Кашни суйлав участокĕнчех агитаторсемпе пропагандиссем, доверенăйсем пысăк ĕçсем турĕç. Вĕсем суйлав участокĕсене, суйлавçăсен килĕсене, хваттерсене карĕç. Агитаторсемпе пропагандиссем коммунистсемпе партире тăманнисен блокĕ тăратнă кандидатсемшĕн агитацилерĕç. Коммунистсемпе пĕрле партире тăманнисем те темиçе çĕр çын большевиксла тĕрĕс сăмаха халăх хушшинче сарчĕç, Ленин—Сталин парти совет халăхĕн чăн-чăн çулне пулни çинчен нихăçанхинчен те тĕплĕн ăнлантарса пачĕç. Вĕсем халăха парти тавра, Сталин йулташ тавра тата тачăрах пĕрлешсе тăракан тума, тăшмансене хирĕç хайаррăн кĕрешме пултаракан тума пулăшрĕç.

Суйлав кампани вăхăтĕнчи большевиксен партин идейине, Ленин — Сталин идейине нихăçанхинчен ытларах пĕтĕм халăх ăнланса илчĕ. Кун пек ĕç историре пулман. Суйлав кампани вăхăтĕнче митингра, пухура, канашлура пулман, доклад, калаçу итлемен çынна тупма питĕ хĕн. Пĕр факт. Исаково суйлав участокĕнче. (Трак р.) 560 суйлавçă. Парти Тĕпкомĕ чĕнсе калания ăнлантарма пухăннă суйлавçăсен пухувĕнче 500 çын пулнă, кунашкал тĕслĕхсем пирĕн темĕн чухлĕ пур.

Агитаторсемпе пропагандиссем пирĕн совет халăхĕ Ленин — Сталин парти йертсе пынипе историлĕ çĕнтерÿсем туни çинчен халăха простă тата питĕ ĕненмеле калаça пачĕç. Пирĕн кашни çĕнтерĕве, çитĕнĕве çĕршывăн кулленхи пурнăçĕнчи фактăсемпе, примерсемпе кăтартса пачĕç. Халăх хушшинчен тухнă агитаторсемпе пропагандиссем социализмла тăван çĕршывăн çитĕнÿсене хайсен районĕн, колхозĕн, колхозниксен, заводăн примерĕсемпе çирĕплетрĕç.

Пирĕн агитаторсемпе пропагандиссен хитре сăмах калана пулсан та, суйлавçăсен сăмахĕсем тата витĕмлĕ, хĕрÿлĕ пулчĕç. Суйлавçăн кашни сăмахĕ простă пулчĕ, ăна нимĕн те илемлетмен, вăл — халăх сăмахĕ. Кашни оратор, Совет Союзĕн рйадовой, мухтанман, ĕçе йуратакан çынни тăван çĕршывăн чăн-чăн хусин пек, социализмла çĕршывăн патриочĕ пек каларĕ.

Массăсен политикăлла хастарлăхĕ хăватлă çĕкленни пирĕн фабриксемпе заводсенче, колхозсенче социализмла ăмăртăва çÿле çĕклерĕ. Çакна çирĕплетекен факт: стахановла рекордсен сталинла вункунлăхĕ ăнăçулă иртни, ăна малалла сарса пыни.

Суйлав кампанийĕ пĕтрĕ. Пĕтĕм халăх суйлав результачĕсене пысăк хавасланпа, пысăк савăнăçпа кĕтсе илчĕ. ССР Союзĕн Аслă Советне коммунистсемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсене суйланă. Вĕсем пирĕн социализмла тăван çĕршыва чаплăн, шанчăклă ывăлĕсемпе хĕрĕсем, халăх ĕçĕшĕн чĕререн тăрăшса ĕçлекен çынсем.

Суйлав кампани кунĕсенче парти организацисен руководителĕсем фабриксемпе заводсенче ĕçлекен лайăх колхозниксене нихăçанхинчен аван пĕлчĕç. Парти организацийĕсен пропагандиссемпе агитаторсен çĕнĕ кадрĕсем пулайлагчĕç. Агитаци пропагандă ĕçне партире тăракан тата партире тăман большевиксен çĕнĕ йышĕ ушăлчĕ.

Акă, Ишлей районĕнчи Карл Маркс йачĕпе тăракан колхоза суйлав кампанийĕ пуçланичен колхозниксене хаçат-журналсем йĕркелĕ вуласа паракан пулман. Суйлав кампани вăхăтĕнче 12 агитатор, вĕсенен 9-ше рйадовой колхозниксем агитацийе пропагандă ĕçне туса пынă.

Суйлав комиссси членĕсенче, доверенăйсенче, агитаторсенче ĕçлесе темиçе çĕр çын пысăк шкул витĕр тухрĕç. Çак совет халăхĕн рйадовой çыннисем хайсен ĕçĕсемпе халăх массине парти тавра тата çирĕпрех пĕрлешсе тăракан турĕç.

Парторганизацисен задачи — суйлав кампани вăхăтĕнче агитаторсемпе пропагандиссене малашнехи политикăлă-массăлă ĕçре çирĕплетесси пулать. Çакна тума халăх хай ыйтать. Анчах та çак ĕçе тума кирлине хăшпĕр çĕрте çаплах ăнланса илмен-ха. Суйлав кампани вăхăтĕнче суйлав комисси членĕсенче, доверенăйсенче, агитацийе пропагандă ĕçĕнче ĕçленĕ активиссене малашнехи ĕçе йавăçтарасси çинчен манса кайма ĕлкĕрнĕ те. Çакăн çинчен пире Çĕрпÿ районĕнчи Тивĕш колхозĕнчен, Патăрйел районĕнчи Сталин йачĕпе тăракан колхозран çырса пĕлтерессĕ. Суйлав кампани вăхăтĕнче халăх хушшинчен тухса çитĕннĕ агитаторсемпе пропагандиссем çинчен манни, вĕсене кулленхи ĕçре усă курманни çинчен ытти организацисенчен те çырса пĕлтерессĕ. Çак халĕ палăракан йăнăша пысăклатма памалла мар, ăна халех тÿрлетмеле. Çĕнĕрен ÿссе çитĕнекен агитаторсемпе пропагандиссен йышне малашнехи ĕçре çирĕплетемеле.

Суйлав кампанийĕнче палăрнă партире тăман большевиксен коммунистсен партине кĕрес хавасла пысăк. ССР Союзĕн Аслă Советне суйласа иртернĕ май, ÿсне политикăлă çĕкленÿ парти ретне чи лайăх рабочине, чи лайăх колхозникĕ, чи лайăх комсомолеца, чи лайăх интеллигента илме май туса пачĕ. Парти организацисен çакăнпа та лайăх пĕлсе усă курмала.

Р. Шашков.

Колхоз çамрăкĕсем

ЙЕЛЧĔК. Çĕнĕ Тĕмер йалĕнчи колхозниксем, уйрăмах çамрăксем, йалта вулав çурчĕ уçнине хавасланкĕтсе илчĕç. Халĕ çамрăксем каçсерен вулав çуртне пухăнаççĕ. Кунта çĕнĕ хаçат-журналсем вулаççĕ, шашкăла, шахмăтла, доминола выляççĕ.

Вулав çурчĕ çумĕнче политкружок, турăсăрсен организацийĕ тата хорпа драмă кружокĕсем ĕçлеме пуçларĕç.

Кунтах радио лартнă. Радио итлеме каçхине ваттисем те пухăнаççĕ.

Массăлă кружоксем, халăхи вăхатра çĕнĕ çула кĕтсе илме хатĕрленеççĕ. Çĕнĕ çул каçхине çамрăксен пысăк вечĕр пулать.

Н. Алексейев.

ЙЕТĔРНЕ. Чурпайра нумай пулмасть 200 çын вырнаçмалăх клуб туса пĕтерчĕç. Çĕнĕ клубра колхоз çамрăкĕсем „Йуратури прорыв" йатлă пиесса лартса пачĕç.

В. Лазарев

Финанс планне тултарассишĕн большевикла ĕçлемеле

СĔНТĔРВĂРРИ. ПСК(б)Парти Обкомĕн нойаберти пленумĕ финанс ĕçĕ çинчен йышăннă постановленине сÿтсе-йавнă хыççăн районри хăшпĕр йалсоветсем финанс ĕçне лайăхлатасшăн ĕçлеме пуçлани палăрать. Шупашкар Есмĕл йалсовечĕ (йалсовет председателĕ Жандаров) массăлă ăнлантарулă ĕçе мала курса ĕçлесе пынипе, районра чи малтан пур тÿлевсем тăрăх та укçа-тенкĕ пухас плансене тултарчĕ. Кушниковă йалсоветĕнчи финанс секци руководителĕ Лукийанов, йалсовет секретарĕ Йемельйанов халăх хушшинче массăлă ăнлантарулă ĕçсем туса пырса, декабĕрĕн 20-мĕшне займ укçине 100 процент, ытти тÿлевсенчен: йалхуçалăх налогĕ 98 процент, самообложени—88 процент тултарчĕç. Водолейево йалсоветĕнче укçа-тенкĕ пухас ĕçре стена хаçачĕ питĕ пысăк пулăшу парать. Кунта йаланах стена хаçачĕ çинче укçа-тенкĕ пухас ĕç мĕнле пынине çутатаççĕ. Финанс секци членĕсем ПСК(б)П Обкомĕн финанс ĕçĕ çинчен йышăннă постановленине халăха тĕплĕн ăнлантарса панă. Çапла ĕçлесе пынипе ĕнтĕ йалсовечĕ декабĕрĕн 20-мĕшне укçа-тенкĕ пухассине 88 процента çитерчĕ.

Анчах пĕтĕмĕшпе илсен районра финанс планне тултарасси ытла та çителĕксĕр пырать. Район йулашки квартăл планне декабĕрĕн 20-мĕшне 68,62 процент çеç тултарнă.

Финанс планне тултарасси çителĕксĕр пыни вăл—йалсоветсем, районри финанс пайĕнче ĕçлекенсем финанс ĕçĕ çине çителĕклĕн çавăрăнса пăхмасăр, массăлă ăнлантарулă ĕçе пур çĕрте те кирлĕ пек туса пыманнинчен, тата руководителсенчен хăшпĕрисем йурийех хайсем тÿлемели укçана тÿлемесĕр пăрăнса йулнинчен нумай килет. Акă, Макаç йалсовет председателĕ Корнилов, йалсовет секретарĕ Йуркин хăйсем йалта примерлă пулса пур парăмсене те малтан татса пырас вырăнне, государствă умĕнчи парăмсенчен пăрăнса, финанс планне тултарассине йурийех чармантарса пыраççĕ. Йалсоветра финанс секци (секци руководителĕ Владимиров) ĕçлемест. Государствă умĕнчи парăмсене вăхăтпа парса татассипе нимĕнле массăлă ăнлантарулă ĕçсем туса пыман пирки йалсовет финанс планне 53 процент кăна тултарнă.

Карабаш йалсовет председателĕ Ольиванов тăрăшса ĕçлемест. Вăл финанс планне тултарассишĕн массăлă ăнлантарулă ĕçе туса пырас вырăнне, вăхăта йаланах ĕçсе ÿсĕрĕлсе çÿресе иртерет. Финанс планне Карабаш йалсовечĕ 60 процент кăна тултарнă Ăстакасси йалсовет председателĕ Иванов, Есмĕл йалсовет председателĕ Казанов пайанхи кува çитсе те хăйсен килĕсенчен тÿлемели йалхуçалăх налогне пĕр пус та тÿлемен.

Районри финанс пайĕнче ĕçлекенсем йала финанс планне тултарма тесе кайсан хăшпĕрисем ĕçрен пăрăнса çÿреççĕ. Пĕр тĕслĕх. Хуракассинче колхозниксемпе йединоличниксен аслă пухувĕ пулса иртрĕ. Çак пухура участкăри страховой инспектор Чернов тата районри финанс пайĕнчи специнспектор Комаров пулнă. Çапах та вĕсем кунта финанс планне тултарасси çинчен сăмах та чĕнмен, нимĕн те ăнлантарман. Тата Кĕçкей йалсовечĕн контрольорне Трепова йалти халăх хăйсен пуххине пырса ПСК(б)П Обком пленумĕн решенийĕсене ăнлантарма ыйтнă. Анчах Трепов халăх ыйтăвне пур вăйа кĕртессине шутламан та, вăл вăхăта улахсенче чупса çÿресе çеç иртернĕ.

4-мĕш квартăл вĕçленесси шутлă кунсем вĕçне кăна йулчĕ. Партипе совет организацисен, финанс оргăнĕсен финанс ĕçĕнчи тăшманла ĕçсен йулашкисене тĕпрен пĕтермеле. Пуррин те финанс планне большевикла хастарлăхпа тултарса, çĕнĕ çула, сталинла виççĕмĕш пйатилеткăн пĕррĕмĕш çулне, пысăк çитĕнÿсемпе кĕтсе илессишĕн тăрăшса ĕçлемеле.

Ворошиловградри Октаберти революци йачĕпе тăракан заводра тунă „Иосиф Сталин" паровоз „ССР Союзĕнчи социализмла чукунçул транспорчĕ 20 çул тултарни" йатлă выставкăра. Унăн хăвăртлăхĕ пĕр сехетре 150 километр.

(Союзфото).

Çуракине хатĕрленес ĕçе йертсе пымалла

Сĕнтĕрвăрри. Колхозсем умĕнче пайан куна тăракан задач вăл—тупăшсемпе тырпулсене валеçсе çитерсе виççĕмĕш сталинла пйатилеткăн 1-мĕш çулĕнчи çуракине большевикла хатĕрленесси. Районра малта пыракан колхозсем çакна пурнăçлаççĕ те ĕнтĕ. Пысăк Маклашкинăри „Осоавиахим", Пĕчĕк Маклашкинăри „Хĕрлĕ Çар" колхозсем çуракинче акма кирлĕ вăрлăхлăх тырăсене трийерпа тата триумфпа суртласа амбарсене уйăрса хуна. Халь кашни кунах хире тислĕк кăлараççĕ. Йалхуçалăх машинисене йусаса хатĕрлеççĕ. Шуршăлти Блÿхер йачĕпе тăракан колхоз та çине тăрсах çуракине хатĕрленме пуçларĕ. Çак кунсенче вăл 20 гектар çинче йур тытрĕ. Вăрлăхлăх тырăсене вуртласа çитернĕ. Макаç йалсоветĕнчи колхозсем те çуракине пĕр-перинпе социализмла ăмăртса ĕçлесе хатĕрленеççĕ. Вĕсем çак кунсенче 1500 лав ытларах хире торф кăларчĕç. Еплесри „Хĕрлĕ паттăр" колхозри колхозниксем çитес çул кăçалхинчен те вăйлăрах тырпул туса илессишĕн мĕн пур хастарлăхпа ĕçлеççĕ. Колхоз çине тăрсах çуракине хатĕрленнине тата колхозра кăна телейлĕ те савăнăçлă пуйан пурнăç пулнине кура çак кунсенче кунта пĕр хуçалăх колхоза кĕчĕ.

Районри 95 колхозран пайанхи куна Вăрман Кăршкари „Боевик", Чĕнерти „Стрела", Кив Тутайкассинчи „Кунер", Хурапхари „Октаберĕн 13-мĕш çулĕ", Кушникри „Новая деревня" тата Пуснаркасси, Кĕçĕн Маклашкинă колхозĕсенче çеç вăрлăхлăхсене суртласа хатĕрлесе хунă. Ытти колхозсенче ку тĕлĕшпе нимĕн те туман-ха.

Шуршăл участкинче (участкăри агроном Кирилов) 5 трийертан 2 трийер Чăрăшкассипе Упкасси колхозĕсенче çеç ĕçлеççĕ. Йуртакасси, Арзаматовă, Шуршăл колхозĕсенче трийерсем ĕççĕр лараççĕ.

Есмĕл участкинче (участкăри агроном Петров) Чĕнерти „Стрела", Кудемерти „Трудовик" колхозсен трийерĕсем çеç ĕçлеççĕ. Çичĕ Пÿртри „Паскав", Шĕнерпуçĕнчи „Муравейник", Есмĕлти „Удар..." колхозсенче трийерсене ... лартаççĕ.

Наратчакки участкинче (у... ри агроном Майорова) Ак... „Хĕрлĕ етна", Ускасси... йачĕпе тăракан колхоз, Хур... синчи „Социалисăм" колхоз... трийерсемпе ĕçлемеççĕ.

Районра чылай колхозсен... кинче акма клевер вăрриск... меççĕ. Шуршăл участкинче ... хозран 8 колхозăн çеç кле... лăхĕ çителĕклĕ. Çĕнйалти ... мовка" колхозра клевер вă... халь те çапса пĕтермен. Вăр... çапмали клевер улăмне ите... че сапаласа выртараççĕ.

Хăшпĕр колхозсенче вă... хăварнă çĕрулмине кирлĕ ... са усрамаççĕ. Аксаринă колхо... (колхоз председателĕ Макс... Кив Тутайкасси колхозĕпе ... тарнă суртлă çĕрулми в... („Вольтман") 300 пăт çĕрте...

Йалхуçалăх машинисене ... ласа çуракине хатĕрлесси çи... сĕр вырăнта тăрать. Шĕнерпу... „Муравейник" колхозра пл... кĕрхи çĕртме пĕтернĕренпе ... çĕ лаççи умĕнче лартаççĕ. ... председателĕ Греков:

— Плуг çĕрулми пек ... вăл, тимĕрçĕсен йерçу пул... саса лартĕç-ха,—тесе ларать.

Колхозниксене агротехник... рентес ĕçе кирлĕ пек туса ... çĕ. Районĕпе заочнă вĕрен... çын ытла çырăннă. Заочник... ĕçлессине малтанхи вăхăт... çĕрте те йĕркелеме тыт... Анчах йулашки вăхăтра ку... йалтах йапăхтарнă. Заочник... Шуршăл участкинче кăна ... вĕрентсе кăларнă.

Райçĕрĕç пайĕнче ĕçлеке... ракине хатĕрленес ĕçсене ... лĕ туса пыма шутлаççĕ. Р... пайĕн пуçлăхĕ Й...риков й... калать:

— Понимайеш, халь тыра ... кампани пырать, тырăсене ... пĕтерсен çине тăрсах ç... хатĕрленме тытăнĕç,—тет.

В. Васи...

Стахановла рекордсен сталинла уйăхл...

Икшер нормă тултаракансен йышĕ ÿ...

Декабĕрĕн 22-мĕшĕнче Шупашкарти тир-сăран завочĕ 560 мăшăр ата-пушмак туса кăларнă. Ку кун заводра пысăк тухăçлăхпа ĕçлекенсен тата икшер нормă тултаракансен йышĕ чылай ÿсрĕ. С. Иванов йулташ нормăна 239 процент тултарса малти вырăна тухрĕ, Сурйаниновпа Золотова йулташсем нормăна 200 порцентшар тултарчĕç.

Нормăна 150 процентран тултаракансем вуншарăн п... наççĕ. Акă вĕсем: Н. Лĕш... процент, Мйасников—183 ... комсомолец Шоронов—196 ... цент, Вагин—177,9 процент, ... ва—165 процент т. ыт. те, ... нă.

Чер...

Комбинатăн ÿсĕмĕ

ÇĔМĔРЛЕ (хамăр корр.): Декабĕрĕн 19-мĕшĕнче комбинатри пур цехсенче те Мускавпа Мускав облаçĕнчи стахановецсем чĕнсе калани сÿтсе-йаврĕç. Рабочисем чĕнсе калание ырласа хайсем çине татăклă обйазателствăсем илчĕç.

Çак кунсенче комбинат ĕçĕнче улшăнусем пулни паларчĕ. Комбинат декабĕрĕн 22-мĕшĕнче хайĕн планне 118,2 проц. тултарчĕ. Малта стольарнăй цех пырать. Вăл декабĕрĕн 22-мĕшĕнче хайĕн планне 150,8 процент тултарнă.

Рекордлă ÿсĕмсем тăв... кунран кун йышланаççĕ. Де... рĕн 21-мĕшĕнче стольарнăй ц... Лаптев йулташ нормăна 23... цент, Рымзин йулташ 285 ... тата Андрийанов стольар 24... цент тултарнă. Декабĕрĕн ... шĕнче колеснăй цехри ... Г. Беспалов йулташ норма... процент тултарнă. Кунашкал ... пер нормă тултаракансем ... та пур. Акă Петров йулт... процент, Иванов—302 проц., ... палов 313 процент тултарнă.

Пуйан та культурăлă пурăнаççĕ

Мăн Хирлепре „Строитель" колхоз членĕсем (Вăрнар районĕ) пуйан та культурăлă пурăнма тытăнчĕç. Ĕлĕкхи вăхăтра чухăн, тарçăра ĕçлесе пурăннă Матвейев халь 4 пин тенкĕ тăракан пысăк та çутă çĕнĕ пÿрт лартрĕ. Вăл кăçал колхозра ĕçлесе 985 ĕçкунĕ тунă. Халĕ тупăшсене валеçсен 240 пăт тĕштырă, 985 тенкĕ укçа тата ыт. тупăшсене те нумай илчĕ. А. Матвейев пек пуйан та культурăлă пурнакан семйесем йалта таташ та нумай.

Н. Куликов.

* * *

Кив Шулханти „Смычка" колхозра (Вăрмар р-нĕ) Семенов Кондрати семйи кăçал 1550 ĕçкунĕ тунă. Ку шутран К. Семенов хăй 50 çулран иртнĕ пулсан ... ĕçкунĕ, ывăлĕ 630 ĕçкунĕ ... Халĕ Семенов семйи 580 пă... рă т. ыт. çимĕçсем те нума...

В, Григор...

* * *

Сукут йалĕнчи (Патăрйел... нĕ) Кураков Александр пĕчĕ... тăлăха йулса çын патĕнче ... тарăхса ÿснĕ. Вăл колхоз... зацилесенех колхоза кĕрсе ... ланса ĕçлеме пуçланă. Халь ... колхозра стахановец пулса ... кăçал ăна колхозра пур... те примерлă пулса ĕçленеш... хоз правленийĕ 50 тенкĕ ... сысна çури парса парнелĕ... раков колхозра пуйан та ... рăла пурăнма пуçларĕ.

В. Н. Йелки...

Колхозсенчи електростанцисем

СĔНТĔРВĂРРИ. Есмĕлти „Ударник" колхозăн електростанцийĕ 1934 çултанпа ĕçлет. Халĕ кунта електричествăпа нумай колхозниксен килĕсене, колхоз правленине, клубва, кооператива, лаша витине, фермă çурчĕсене çутатнă.

Есмĕлсенчен пример илсе, 1935 çулта, Лапри Чăрăшкасси колхозникĕсем те електростанци лартрĕç. Кунта, колхоз çурчĕсемсĕр пуçне, 45 колхозник çуртне çутă кĕртнĕ.

Шуршăлти Блÿхер йулта... чĕпе тăракан колхоз та çавăн... кех суйлав кунне електриче... çутипе кĕтсе илнĕ. Халĕ ... никсен килĕсене çутă кĕрте...

Шĕнерпуç колхозникĕсем ... тростанци тума двигател ... килсе лартрĕç. Колхозниксем ... хушшине йупасем лартса, про... сем караççĕ. Електростанци ... çулăн пуçламĕшĕнче ĕçлеме ... лать.

Б...

Чăваш орфографинче пулма кирлĕ улшăнусем çинчен*)

Чăваш орфографи реформи çинчен Чăваш правителствă 1933 çулта йышăннă постановлени тухнăранпа чылай вăхăт иртрĕ. Чăваш алфавитне Б, Г, Д, Ж, З, Ц, Ч саспалисене кĕртни урăх чĕлхерен илнĕ сăмахсене тĕрĕс çырас ĕçре пысăк улшăну турĕ. Урăх чĕлхерен кĕнĕ пайăр йатсене, географири терминсене, аслăлăхпа техникă тата обшествăпа политикă терминологинчи сăмахсене тĕрĕс çырас ĕçре çитĕнÿсем пурри çинчен каласа хăвармасăр тăма пултараймастпăр.

1933 çулта йышăннă постановлени тухнăранпа пирĕн чăваш чĕлхи строителствинче сахал мар çĕнĕ ыйтусем тухса тăчĕç. Ку ыйтусене пирĕн пурнăç хайех кăларса пырать.

Чĕлхе тĕлĕшпе тумали ĕçсем умне тухса тăнă çĕнĕ ыйтусем пирĕн орфографи правилисенче чылай улшăнусем тума хушаççĕ. Ку улшăнусем чăн малтан шкул ачисемшĕн, вĕрентекенсемшĕн пысăк ĕç, вĕсене пулăшакан ĕç пулса тăма кирлĕ, тата пичет ĕçĕнче ĕçлекенсемшĕн те кулленхи ыйту пулса тăрать.

Пирĕн, чăн малтанах, чăваш çырăвĕнче усă курмали саспаллисем çинчен каламалла пулать. 1933 çулта йышăннă правилăсем тăрăх пирĕн çырура 33 саспалли пулмалла пулнă, вăл халĕхи вăхатра çапла та.

Епĕр паракан сĕнÿ тăрăх чăваш çырăвĕнче 39 саспалли пулмала. Халичченхи саспаллисем çумне епĕр Щ, Ъ, Ь, Э, Ю, Я саспаллисене хушас тетпĕр. Малтанах асăрхаттаратпăр: ку саспаллисем Б, Г, Д, Ж, З, О, Ф, Ц саспаллисем пекех пĕтĕмпе те урăх чĕлхесенчен илнĕ сăмахсене çырма çеç пулаççĕ. Çавăнпа урăх чĕлхерен кĕнĕ сăмахсене, йатсене тĕрĕс çырмали правилăсем çинчен каласни пирĕншĕн пысăк ыйту пулса тăрать.

Ку ыйту пире пуринчен ытла вырăс чĕлхипе чăваш чĕлхине вĕреннĕ çĕрте калама çук пысăк усă памала. Ытти чĕлхесенчен кĕнĕ сăмахсемпе йатсене çырас çĕрте вăл сăмахсемпе йатсене графикă йенчен тĕрĕс кăтартса парассине тĕп вырăна хумала. Урăх чĕлхесенчен илнĕ сăмахсенче, йатсенче епĕр ку тăранччен пусăм хыçĕнчи А, О, Ы, Е сасăсене чăвашла Ă, Ĕ саспаллисемпе çырса пырать, тăмăр (трактĂр, директĂр, рынĂк, ВолĂгдĂ, ГогĂль, ТулĂ, опĂт, агĔнт, цемĔнт). Пирĕн сĕнÿ тăрăх ку сăмахсемпе йатсене вырăсла графикăпах çырмала: (тракторО, директОр, рынОк, вожатЫй, ГогОль, ТулА, опЫт, техникУм, пролетариЙ, массА, Элемент, поЭт, Юбилей, отрЯд, фельЕтон, ВасЯ, князь, бЮджет, бюро, тетрАдь, плоЩадь, словарЬ т. ыт. те).

Ытти чĕлхесенчен килнĕ сăмахсене çырма Ъ-па Ь паллисене те кÿртмеле: (ъ—а, сăмах варрине, ь—а сăмах варрипе сăмах вĕçне) обЪект, субЪект, ГорЬкий, ХарЬков, ИлЬич, октЯбрь, ЯнварЬ тесе çырмала пулать. Сăмахсене вĕçленĕ çĕрте, паллах сăмах вĕçĕнчи Ь тухса ÿкет: октябрте, октябртен т. ыт. те.

Чăваш чĕлхине ытти чĕлхесенчен кĕнĕ сăмахсемпе йатсене: Дарвин, Берлин, куб, скобкА, зоологиЯ, перпендикулЯр тесе çырмала. Çав хушăрах: савăт, пăрахут, вакун, саккун, расхут, сат, сут, арпус, пасар, чукун сăмахсене, вĕсем хайсен формине тата сасăпа калавине улăштарнă пирки, чăвашла калана пекех çырмала.

Ытти чĕлхесенчен илнĕ ИЯ, ИЕ, ИЙ сыпăксемпе пĕтекен сăмахсем (ИталИЯ, аналогИЯ, юстицИЯ, постановлениЕ, пролетариЙ, ГорькиЙ) пуçламăш формăра вырăсла графикăпах çырăнаççĕ, ытти падежсенче Я, Е, Й тухса ÿкеççĕ. Пару-тăву падежĕсенче Я, Е, Й вырăнне Й йулать (ИталиЙе, постановлениЙе, ГорькиЙе).

Ытти чĕлхесенчен кĕнĕ ЕЦ, ИЗМ, ИСТ, СТЬ суффикссемпе пĕтекен сăмахсене тĕрĕс çырасси те кирлĕ ыйту. Комсомолец, партиец, красноармеец сăмахсене пуçламăш формăра çаплах çырмала, вĕçлевленĕ чух Й кĕрсе ларать (красноармейцăн, красноармейца т. ыт. те), ЕЦ умĕнче хупă сасă тăрсан, вĕçленĕ чух тухса ÿкекен Е вырăнне Ь кĕрет (комсомольцăн, комсомольца, комсомольцпа т. ыт. те). ИЗМ суффикспа пĕтекен сăмахсене çав суффикса улăштармасăрах çырмала (социализм, дарвинизм). ИСТ суффикса та туллипех хăвармала: КоммуниСТ, телеграфиСТ, специалиСТ çырни вырăнлă.

Тепĕр пысăк ыйту—хупă сасăсене вăрăмлатса (иккĕлетсе йе вăрăмлатмасăр) çырасси çинчен. Ку тĕлĕшпе Ла, Ле (каймала, килмеле), ЛĂ, ЛĔ (лашалă, ĕнелĕ), ЛĂХ, ЛĔХ (хăмалăх, çÿремелĕх) сыпăксене çырасси çинчен 1933 çулта кăларнă правилăсем пирĕн халăх хушшине лайăх вырăнаçрĕç.

Çавăн пекех епĕр хăшпĕр формăсене тĕрĕс çырасси, тата тăвасси çинчен те пĕр-ик сăмах каласшăн. Çыракансем час-часах У, Ў сасăсемпе пĕтекен сăмахсене тĕрĕс çырманнине курма пулать. Час-часах: çыру—çырува, çырувăн, кĕрÿ—кĕрÿвĕн, кĕрÿве тесе çырнине тĕл пулатпăр. Тĕрĕс пулма пултараймасть кун пек çырни. Çырмала: çырăва, çырăвăн, кĕрĕвĕн, кĕрĕве т. ыт. те.

Т, Ť, Д, ДЬ саспаллисемпе пĕтекен йапала йачĕсене камăннине пĕлтерекен сыпăк хутшăнсан йатпа камăнлăх падежĕсенче Т, Д—Ч пулса кайаççĕ (турат—турачĕ, турачĕн, склад—склачĕ, склачĕн тетрадь—тетрачĕ). Ытти падежсенче Т, Д саспаллисем каллех çаплах йулаççĕ (туратне, докладнĕ, туратĕнчен, складĕнчен).

Урăх чĕлхесенчен илнĕ А, Е сасăсемпе пĕтекен йатсене (арена, трахома, кушетка, тире) А, Е сасăсемпе пĕтекен йатсем пек (лаша, ĕне) вĕçлемеле (арена, аренан, аренана, аренапа, аренара, аренаран). Анчах кунта акă мĕн каласа хăвармала пулать: ытти чĕлхерен илнĕ сăмахсенче тăракан ударени, вăл сăмах, вĕçĕнчен иккĕмĕш йе виççĕмĕш сыпăкра тăрать пулсан, сăмаха вĕçленĕ чухне хăйĕн малтанхи вырăнĕнчех йулать (арĕна—арĕнана т. ыт. те.), ударени сăмах вĕçĕнче тăрать пулсан, вара вăл падеж вĕçне тухать (тире—тирене, тирере).

Система, силос, бассейн, семафор пек сăмахсене чăвашла çырнă чухне пуриншĕн те пĕр правилă пулмала. Вăл сăмахсене епĕр вырăсла графикăпа çыртарасшăн.

Власть, область, промышленность пек сăмахсен çинче уйрăм чарăнасшăн. Пирĕн шутпа вăл сăмахсене вĕçлеме çапла пулмала: власть—властĕн, властпе, властрен, властсем т. ыт. те.

Урăх чĕлхесенчен илнĕ класс, прогресс, Донбасс, металл, финн йышши сăмахсене пуçламăш формăра вырăс графикипех çырас пулать, ытти падежсемпе формăсенче Л, С, Н сасăсене иккĕлетни кирлĕ мар.

Паллах, чăваш орфографийĕ умне тухса тăнă кирлĕ ыйтусем кунпах пĕтмеççĕ. Вĕсем нумай. Вăл ыйтусене массăсем хушшинче, чăн малтанах пичет ĕçĕнче ĕçлекенсен тата учителсен хушшинче уççăн сÿтсе-йавмала. Пысăк ыйтусем, кирлĕ ыйтусем. Вăл ыйтусене халех çине тăрсах татса пани пирĕн çыракансене, чăн малтан вĕрентекенсемпе вĕренекенсене, тĕрĕс çырмали правилăсен, орфографийе, лайăхрах пĕлме, вĕренме пулăшмала.

Декабĕрĕн 21-мĕшĕнче Чăвашсен аслăлăхпа тĕпчев культурă институчĕ çак ыйтусем тăрăх пичет тата педагогикă ĕçĕнче ĕçлекенсемпе пĕрле канашлу туса иртерчĕ. Чăваш орфографийĕ умне тухса тăнă ыйтусене канашлу хапăл туса йышăнчĕ. 27-мĕшĕнче Пичет суртĕнче (Дом печати) тата аслăрах совешчани пулса иртмеле. Вăл совешчанийе пурне те пыма сĕнетпĕр.

Халĕ ĕнтĕ пирĕн çак орфографи ыйтăвĕсене сарлака массăсем хушшинче сÿтсе йавмала. Вулакансем, сăмах сирте.

Н. РЕЗЙУКОВ.

*) Редакцирен. Резйуков йулташ статйине ыйтсе-павас шутпа пичетлесе, орфографи ыйтăвĕ тăрăх вулакансене хăйсен шухăшĕсене пĕлтерме ыйтатпăр.

ШОТА РУСТАВЕЛИ

çурални 750 çул тултарнă тĕле

Грузи халăхĕн чаплă поечĕ

[...]Чайан, декабрĕн 24-мĕшĕнче, Грузи [ха]лăхĕн асларан та аслă поечĕ Шота [Ру]ставели çурални 750 çул тултарат. Ин[...] алăра „Витязь в тигровой шкуре" [йа]тлă чаплă поемăн автарĕ Шота Руставели çинчен тĕплĕн каласа паракан [био]графилĕ сведенисем çук. Унăн пур[нăç]ĕ çак асăннă поемăн пуçламăшĕнче [...]а пĕтмĕшĕнче каланă строфасем тă[рăх] çеç пĕлетпĕр епĕр. Çав строфасем [кă]тартнă тăрăх; поет XII-мĕш ĕмĕрĕн йу[л]алки çулĕсенче, XIII-мĕш ĕмĕрĕн пуçламăшĕнче пурăннине лайăххăн пĕлме пулат. Вăл вăхăтра патшара Тамара [...]ă пулнă, çак поемăна та Тамарăна [...]сас шухăшпа сырнă поет. Вăл хăй [...]тăр-хĕвеланăç Грузире, Месхети те[...]ĕн провинцире çуралнă, ун чухне кÿ[...]винци патшалăхра чи культурлă про[вин]ци вырăнĕнче шутланнă.

Шота Руставели хăй вăхăтĕнчи пи[са]тĕлсемпе философсенчен, (Чахрухадзе, [Ш]автели, Моисей Хонели) чи вайли, чи [та]лантли пулнă пулин те, унăн мухтавлă [йа]чĕ хăй вилнĕ хыççăн 100—150 çултан [çе]ç Грузи халăхĕ хушшине çаралма [пу]çланă. Грузинсен литературинче Руставели мĕнле вырăн йышăнма пултарнине тĕрĕссĕн хак парас тесессĕн, вăл [вăха]три асаллă, пусмарлă пурнăçа аса [ил]ме кирлĕ. XII-мĕш, XIII-мĕш ĕмĕрсенче грузинсен культури самаях атал[ан]са, Европăри хăшпĕр малта пыракан [па]тшалăхсен (Греци т. ыт. те) культурипе танлашас патнех çитнĕ. Анчах, культурăна малала татах та вăй илтерсе [...]лентерсе йарас ĕçе Грузи çĕршывне [...]па темиçе хутчен çĕмĕрсе кĕнĕ монголсем, хорезмецăсем тата Тамерлан пĕ[...]нех чарса лартаççĕ. Çĕршывăн економикине те, культурине те пĕр хĕрхенÿсĕр [ç]ĕмĕрсе пшесеççĕ вĕсем. Çавăнпа та Грузире вăл вăхăтри литературăран асăнмалăх пĕр памĕтник те пулманнинчен нимĕн тĕлĕнмели те çук.

[Ça]пла вара Шота Руставелин чаплă [йач]ĕ XV-мĕш ĕмĕрте çеç тивĕçлĕн сĕк[...] грузинсен литературинче чи палла [выр]ăн йышăнат. Вăл вăхăтри писателсем [...] йатне хăйсен произведенисенче час-часах асăнаççĕ. Вĕсемшĕн Шота Руставели генилĕ образ пулса тăрат. XVI-мĕш [ĕмĕр]тен пуçланă çĕре Руставели никĕс хурса хăварнă грузинсен литератури идейă [...]шĕнчен те, художествă йенĕпе те ну[...] ситĕнÿлĕ ÿсĕмсем тăват: малала [ÿсс]е пыракан обшествăн интересĕсене [...]кĕн шухăшлакан сынсен образĕсем сыхăнтарма пуçлат. Мĕн чухлĕ культ[ура] вайлăланат, çавăн чухлĕ Шота Руставелин йачĕ хăпарнăçемĕн хăпарса пырат. Унăн поеминчи тĕп герой Тариел грузи халăхĕшĕн чи йуратнă паттăр пулса тăрат. Ун çинчен халăх тĕрлĕрен чаплă йумахсем калат, поемă çумне татах та сĕнĕрен сыпăксем хушат.

Шота Руставелие халăх çапла чĕререн йуратнишĕн тĕлĕнме кирлĕ мар. Мĕншĕн тесен, Руставели халăхăн чи аслă ывăлĕ, хăйĕн çĕршывĕн пĕтĕм чунĕпе йуратакан патриот пулнă. Руставели грузинсен литературине реформласа тĕпренех çĕнетме пултарнă, нумай ĕмĕр хушши каласа халăх сăмахлăхне пуxса чĕлхене калама çук пуйанлатнă. Вăл чĕлхе-пала çинчен та çак тери витĕмлĕ, ăнланмалла. Апла пулман пулсассăн, Руставели хăварнă поемă темиçе ĕмĕр хушши иртнĕ хыççăн та çакнашкал хăватлăн йантăрама пултарайман пулĕччĕ.

Шота Руставели хăй вăхăтĕнчи обшестве пурнăçне витĕр пĕлсе тăнă. Пĕр вырăнта пурăнман вăл, йаланах ниçерти çĕршывсем тăрăх çул çÿреме йуратнă. Вăл апла пулнă иккенне унпа пĕр вăхăтри сынсенчен пулнă тĕрлĕрен елегисем çирĕплетеççĕ.

Сынсен образĕсене, характерĕсене калама çук пысăк мастăрлăхпа кăтартса пама пĕлнĕ Руставели. Унăн геройĕсемпе вăл вăхăтри Европăри пысăк писательсен геройĕсене танлаштарсан, вĕсен геройĕсем шухăка, сăрласа тунă сăнсем пек çеç курăнаççĕ. Руставели хăйĕн геройĕсене ытлашши идеализацилессинчен тăрăшман. Унăн чĕрĕ çын, чĕрĕ пурнăç тĕп сăккун пулнă. Тĕрлĕрен „турăсене, сывлăшри чунсене" ĕненмен Руставели. Унăн геройĕсем хăйсем пĕрре панă сăмахшăн вĕсене ситтинчех кĕрешнĕ, вăл сăмаха калла илес пулсан—машкал пулат, „вăл машкала тÿссе пурăннинчен вилес, мухтавлă вилĕм пултăр" тенĕ вĕсем. Унăн геройĕсем пĕр-пĕрине туслăн пурăнма, туслă пулса, тăшмана хирĕç кĕрешме йуратнă. Анчах пур туссенчен те хаклăраххи вĕсемшĕн лайăх хĕрăшпал пулнă, хĕрăшпалăра çеç çăлăнăç курнă.

Çапла, Шота Руставели вăтам ĕмĕрти поетсенчен чи талантли, чи ирĕклĕ шухăшлакансенчен пĕри пулнă. Хăйĕн аслă мастăрлăхĕпе вăл халĕ те грузинсен литературинче чи малти ретре тăрат. Аслă Октябрь революцийĕ пулнă хыççăн Руставели пире тата та çывăхланнă. Аслă Октябрь революцийĕ çеç унăн аслă [...] культурăна чăн çывăхне кăларчĕ. Вăл тĕрлĕрен чĕлхесем çине куçма пуçларĕ. Ăна вулакансем пиншерĕн, миллионшарăн хутшăнчĕç. Тавалăн пĕрлешнĕ мĕн пур аслă халăх Шота Руставелине тивĕçлĕн чыслат, унăн вилĕмсĕр йачĕпе ĕçĕсене чĕререн хисеплет.

—— o ——

Шота Руставели вăхăтĕнчи историлĕ сурт

[Ну]май пулмаст, вырăнти колхозниксем [...]шнипе, Ткемловани йалĕ çывăхĕнче [ин]тереслă памĕтник тупнă. Ăна ăслăлăх [ĕçл]исем „Козип" храмĕ, тесçĕ. Ун çин[ч]е историрĕ, 18-мĕш ĕмĕрти Грузин Ва[ху]шти йатлă географĕ асăннине çеç тĕл [пул]а пулат.

[Г]рузири искусствăн „Метехи" йатлă [м]узейĕн аспиранчĕ малтанхи хут тĕпчесе пăхни çав памĕтник XII-мĕшпе XIII-мĕш ĕмĕрсенчи сурт пулнине палăртнă. Вăл хăйĕн сенкĕр мрамăр çинче тунă ерешĕсемпе, сырăвĕсемпе тата хăйĕн архитектурипе те интереслă.

Храма лайăххăх тĕпчесе пăхни тата ун тавралĕнче шыравсем туни Руставели тапхăрĕ çинчен нумай çĕнĕ материалсем пама пултарат.



ШОТА РУСТАВЕЛИ.

Нестан-Дареджанăн Фатмă патне сырнă сырăвĕ

(„Витязь в тигровой шкуре" поемăран)

Сут хĕвел пек хĕр сырат: „Ес анперен те хаклă маншăн!
Пĕл, тĕрме çынни еп пултăм, пăчăхатăп тыткăнра.
Турă панă ирĕкпе ман тиврĕ хурлăх çеç курмашкăн,
Санăн сăмахусенче çеç хамăн шанчăка курап.

Тăшманран пĕрре çăлса, ес манăн хурлăха çĕмçетрĕн,
Хаљ ларатăп каджăсенĕн тĕрминче, çÿл-ту çинче:
Крепăç тавралах тăраççĕ салтаксем хурал—пиншерĕн;
Йурату та, пурнăç та ман хурлăхсен тыткăнĕнче.

Мĕн тăшман çинчен пĕлтерĕп еп сана, йуратнă Фатмă?
Каджăсем, вĕсен патшийĕ кайнă тахçанах кунтан.
Анчах крепĕçĕн хуралĕ питĕ йышлă, пит хăватлă;
Хăтараймĕç паттăрсем те хаљ мана çак тыткăнтан.

Автандил çăлма килесшĕн, пур-пĕр ман пата çитеймĕ,
Хурлăх çеç вăл курĕ, туслăх туйăмне асра тытса.
Анчах ун хĕвел пек куçĕ витăса курма пĕлейнĕ,
Савăну та—маншăн вилĕм, савнă тусăм çук пулсан.

Ăраскал хама пилленĕ инкексем çинчен сырмастăп.
Хурланса вăйран еп тухрăм, пурнăçа та ылханап.
Тилмĕрсех санран ыйтатăп, пĕтĕм чĕререн ыйтатăп:
Ес пĕлтер ăна—ăпплантăр, ан шыратăр вăл мана.

Пулнă хурлăхсем те çитĕç. Ытларахăн ан аманттăр,
Хăй вилсе, мана. Ман урăх хурлăха хал çук тÿсме.
Вăл еп хушнă пек тумаст-тĕк, çĕнтерейме нихăçан та...
Тархаслап, вара мана ес чулпалах пер ун чухне.

Ес ыйтан—Тариле те хатĕр еп парне памашкăн,
Хам тирпейлĕн усракан пир татăкне парап ăна.
Тĕсĕ, ман раскал манĕрлĕ, тĕксĕмрех пулсан та, маншăн
Унăн чыс-парнийĕ пулчĕ—питĕ пысăк савăнăç.

Услн Васлейĕ куçарнă.

ЧАПЛĂ УЙАВ

Грузи халăхĕн генилĕ поечĕ, чаплă „Витязь в тигровой шкуре" поемăн автăрĕ, Шота Руставели çуралин 750 çул тултарнине Аслă Совет çĕршывĕнчи тăванлă халăхсем пурте уйавлаççĕ.

Декабрĕн 24-мĕшĕнче Шота Руставели йачĕпе Тбилиси хулинче уçăлакан чаплă пленумра пур халăх писатĕлĕсенчен представителсем пулаççĕ.

Пленум Тблисири Руставели йачĕпе тăракан театрта уçăлат. Малтан пленум Гаприндашвили йулташăн „Руставелипе хаљхи тапхăр" йатлă докладне, унтан профессор Ингороква й-ăн „Руставели тата унăн поезийĕ" докладне, Грузин Руставели тапхăрĕнчи материаллă тата интеллектуаллă культури çинчен — И. Джавахицвили докладне, çавăн пекех тата вырăс писатĕлĕсен П. Павленкопа Н. Тихонов доклачĕсене итлет.

Пленума лынă хăнасем Грузире пулнă вăхăтра Аслă Сталин çуралнă хулана—Горине кайса кураççĕ. Писатĕлсемпе Тбилисири фабрик-заводсенчи рабочисен, студентсен тĕлпулăвĕсем пулаççĕ. Çавăн тах Кавказра больщевикла организацисене тăвас тĕлĕшпе Сталин йулташ мĕнле ĕçленине кăтартакан, Шалва Дадиани сырнă чаплă пйесăна лартса параççĕ. Купсăр пуçне Палиашвили композитор сырнă çĕнĕ „Латавра" оперăна кăтартаççĕ. Шота Руставели пурнăçĕпе ĕçне тата вăл пурăннă тапхăрти пурнăçа кăтартакан художествăлă картинсемпе документсен выставки уçăлат.

Пĕр сăмахпа каласан, Шота Руставели йубилейĕ аслă Грузи искусствин ÿсĕмĕсемпе çĕнтерĕвĕсен парачĕ пулса иртет.

Тăванлă республикăсенчи писатĕлсем Сойузĕнче те ĕç хĕрÿлĕ пырат. Пур çĕрте те, Грузи халăхĕн аслă поечĕн—Шота Руставелин чаплă произведенине хăйсен чĕлхи çине куçарса, хăйсен литературине пуйанлатаççĕ.

Рустави йалĕ

Руставели хăйĕн чаплă поемине çапла вĕçлет: „Тут свой труд кончаю скромный—о, как время вероломно. Тех, чья доблесть столь огромна, в мире свет уже погас. Мир—лишь миг. И в самом деле, дни цвели и дни истлели. Месх безвестный, Руставели, написал я этот сказ".

Çапла ĕнтĕ „Витязь" автăрĕ хăйне Руставире çуралнă месх вырăнне шутлат. Месхети феодаллă тапхăрта Грузи çĕршывĕн чи малта тăракан облăçсенчен пĕри пулнă. Месхети, Грузи çĕршывĕн хĕвелтухăç провинцийĕн—Месхет-Джавахетин составне кĕрсе, Руставели пурăннă тапхăрта стратегилĕ пысăк вырăн йышăнса тăнă. Месхетирен Кура шывĕ гăрăх хĕвел тухăçне тата Йевропăри çĕршывсене каймали аслă çул пулнă. Вăл çулпа çарсем, суту-илÿ обозĕсем çÿренĕ. Çакă вырăнтан феодаллă Грузи Арменипе, Иранпа, Грецине тата Кĕçĕн Азири [...]илÿлĕ сыхăну тытнă. Çавăнпа та мĕн авалтанах Месхети таврашне крепĕçсемпе çирĕплетме тăрăшнă.

Кура шывĕ тăрăхĕнчи пĕтĕм çула чи лайăх крепĕçсемпе сыхласа тăнă. Виççĕмĕш Георгипе Тамарă патша луç пулса тăнă вăхăтри Месхетин тусем хушшинчи хапхи патĕнче, лайăх çирĕплетсе, Вардзи йатлă монастыр туса лартнă. Çав монастыре Тамара патша час-часах çÿренĕ. Çав монастырĕн стенисем çинче Тамарăн тата унăн ашшĕн—Виççĕмĕш Георгин портречĕсем пайан кунччепех упранаççĕ.

Генилĕ поетăн тăван çĕршывĕ пулса тăракан Руставн йалĕ Месхети аслă çулĕ çинче ларат. Месхети—Грузин çырулăхĕпе литературăлă чĕлхине çуратакан вырăн. Ку вырăнтан Руставели вăхăтĕнче аслă писателсемпе политикăла деятелсем нумай тухнă: чиркÿ деятелĕсем—Григорий Хандзели (VIII-мĕш ĕмĕрте), Йевфимпе Георгий Мтацминделисем (XI-мĕш ĕмĕрте), философсем—Йефрем Кĕçĕнни, Ионн Петриций, одăсем çыракан поетсем—Иоанн Шавтели, Саргис Тмогвели, Чахрухадзе.

Месхетин административлă-политикăлă центрĕ авалхи Самцхе, хаљхи Ахалцых пулнă.

Месхетири Руставн—26 килтен тăракан йал. Вăл Кура шывĕнчен инçе мар, Ахалцыхран 18 çухрăмра, сарлака лапамлă вырăна йышăнса ларат. Ăна йантăртан хĕвеланăçнелле çÿлĕ тусем хупăрласа тăраççĕ. Руставн лапамлăхĕ тухăçлă вырăн, унта тырпул, фруктасем лайăх пулаççĕ. Руставн сачĕсене „Хĕрлĕ ту" хушшинчен йухса тухакан çăл шывĕпе шăвараççĕ. Руставн йалĕн йачĕ те çавăнтанах тухнă. Вăл çăл йухса тухнине пĕлтерет. Ахалцыхпа Аспиндза хушшинчи шоççерен 150—200 метр айакинерех улăп тĕми йевĕрлĕ мăкăр вырăн пур. Унти сынсем каланă тăрăх, вăл Руставелин масарĕ пулат.

Аслă поетăн йачĕ тавра нумай йумахсем çÿреççĕ. Вĕсенчен пĕрине,—Руставири Давлишеридзе каласа панине çеç илсе кăтартатпăр. Шота ашшĕ Цахрахи йатлă ту çинче выљăх-чĕрлĕх нумай усранă. Унăн икĕ ывăл пулнă, вĕсенчен кĕçĕнни—Шота. Шота ашшĕне тăшмансем вĕлернĕ. Пĕчĕк тăлăх ачасене ашшĕн [...] кĕшпе те вĕренме малтан Кахетири академине, кайарахпа — Византине йанă. Шота пиччĕшпе, Тамара патша дворецĕнчи поет пулнăскере, кайран патшан министăрĕсем Грузи çĕршывĕнчен кăларса йанă. Грузире йулнă Шотана Тамара патша нумай должнăçсем сĕннĕ, анчах поет Вардзи казначейĕ пулма çеç килĕшнĕ.

Вăл кунта Вардзи çулĕ çинчи Ормопи крепĕçне тытса тăраканăн хĕрне йуратса пăрахат, ăна качча илме сăмах парат, анчах Тамара патша ăна Кодирен пуçласа Цалки патне çитиччченех пысăк çĕр тытса тăракан Коди крепĕçĕн пуçлăхĕн хĕрĕпе мăшăрлантарма тăрăшнă. Шота вара хĕрарăм патша хушнă пек тунă. Ормоцине тытса тăраканăн хĕрĕ, Вардзине кайакан çул çинче, Шотапа тĕл пулсан, Шота парнеленĕ çĕçĕпе чиккĕнсе вилнĕ.

Халăх хушшинче çÿрекен халапсем тăрăх, çакăн хыççăн майра патша Шотана, поет хăй ыйтнипе, Тбилисире казначей пулса ĕçлеме куçарнă. Кунта Шота майра патшана пехелесе „Витязь в тигровой шкуре" поемăна çырнă. Тамарăна йуратса пăрахнă Шота, хĕрарăм патша умĕнче тивĕçе тухайманнипе тарăхса, Йерусалима кайнă. Унтах монах пулса вилнĕ.

С. Маналатийа.

Михаил Чиковани

Шота Руставели тата халăх творчестви

Тĕнче литературин чи лайăх классикĕсем мĕн авалтанах хăйсен тăван халă[хĕн] пултарулăхĕпе тачă сыхăнса тăнă. [Гом]ер, Данте, Сервантес, Шекспир, Шил[лер], Гейне, Пушкин, Толстой, Горький, [Ва]жа-Пшавела — хăйсен творчествинче [хăй]сен халăхĕн культурипе тата унăн [фо]льклорĕпе тачă сыхăнса тăнине кăтар[та]кан чи лайăх примерсем пулса тăраç. [...] литературă йаланах массăран вĕрен[...]ннă. Халăх поезийĕн хĕвелĕпе ăшăн[...] [х]ăй илнĕ поет хăйĕн халăхĕн раскал[...] унăн ĕмĕчĕсемпе интересĕсене па[...]ра йурлат, Халăх кун пек поета [пыс]ăк хак парат, йуратат.

Шота Руставелин „Вепхвис Ткаосани"*) поеми халăх поезийĕпе, епосĕпе [...] музыкĕпе уйăралми сыхăннă. Сăвă [...] ĕçри пысăк мастăрлăх, пурне те [...]анмала калкал чĕлхепе сырни; ге[...] кăмăлĕсене пысăк художествăлла [...] кăтартни—çаксем тĕнче литера[ту]рин чаплĕ пулса тăракан Руставели [т]ворчествине лайăх палăртса тăракан [...]ем.

[Гр]узи халăхĕ чаплă „Вепхвис Ткаосани" произведенине кĕнĕ йумахсемпе ле[ге]ндасенчен, йурăсемпе сăвăсенчен, кала[...]чен, ваттисен сăмахĕсемпе сутмали [...]ăхсейчен нумайĕшне пайан кунччченех [х]ăйĕн асăнче усрат. Грузи çĕршывĕн [...] кĕтесĕсенче те — лапамлă вырăнсене те, çавăн пекех ту-сăтăрлă пайĕсенче те, — сире „Вепхвис Ткаосани" [...]кăн Тариели геройĕ çинчен каласа [...] пултараççĕ.

[Х]алăх легендарлă геройăн тĕлĕнмеле [пу]рнăçĕпе ĕçĕсем çинчен çав тери пысăк [й]уратупа, ăшă кăмăлпа калаçат. Ку ка[...] тĕрлĕ çĕрте тĕрлĕ майлă пулса пы[...]. Хăш çĕрте ăна—„Вепхвис Ткаосани", тессĕ, теп ĕр çĕрте — „Тариели", „Тариелиани" йе „Тариели" çинчен хуна калав".

Руставели пурнăçĕпе пултарулăхне тĕпчекен ăстаçăсен аллинче „Витязь в тигровой шкуре" поемăн халăх хушшинче çÿрекен тĕрлĕ варианчĕсем çитмĕлтен те иртеççĕ.

Шота Руставели произведенийĕ халăх пурлăхĕ пулса тăнă. Вăл нумай ĕмĕрсем хушши поезилĕ творчествăн тата сăмах мастăрлăхĕн виçийĕ вырăнне шутланнă. Кирек мĕнле суртра та ăна хаклă йапала вырăнне хурса пурăннă. Качча кайакан хĕрĕн тупри шутĕнче ылтăн-кĕмĕлсемпе пĕрлех, „Вепхвис Ткаосани" поемă чи малтанхи вырăнта пулнă. Туй хыççăн тамада (кĕрекеçĕ) çамрăк мăшăра пиллесе сăвăлă сăмах каланă чухне час-часах „Вепхвис Ткаосани" çинчен те асăннă:

Пусть жизнь наградит их обоих
Обильем великих щедрот,
Пусть будет их жизнь справедливой,
Чтоб ими гордился народ.
В приданое все по закону
Я дочери отдал своей.
Вдобавок — „Вепхвис Ткаосани",
Всех в мире жемчужин ценней.

Халăх чаплă Шотана йуратат, ăна йаланах асра тытат. Кавказ сăрчĕсен сывăхĕнче-и, лăпкăн, йаранса йухакан Курапа шарласа йухакан Рион шывĕсен сыранĕсем патĕнче-и — пур çĕрте те ватти-вĕттипех, хĕрарăмĕ-арçынĕпех хăйсене сывăх поемăна пĕлеççĕ.

Халăх ăнланăвĕнче поемăри сынсем— ĕçхалăхĕн интересĕсемшĕн кĕрешекен чăн-чăн геройсем пулса тăраççĕ. Акă, сăмахран, Тариели патшана хирĕç пĕрешсе, унăн тарçисене йалт çĕмĕрсе тăкат, çав вăхăтрах чухăн хресченсене хĕрхенет.

Автор поемăн умсăмахĕнче çапла сырнă:

„Узор прекрасный древней сказки, ее
Грузинский пересказ;
Как перл единственный—прекрасный,
горящий на руке алмаз,
Я отыскал. Строкой напевной он под
моим пером поет,
К труду, к любви, к стихам певучим
меня любимая зовет.

Поет пĕтĕм чунĕпе фольклорпа сыхăннă. Вăл халăх творчествипе йумай усă курат. Хăшпĕр çĕрте унăн хăйĕн творчествипе фольклор хушшинчи уйăрмлăха тупма та йавăр. Вĕсем пĕр-пĕрипе çав терийех тачă сыхăнса тăраççĕ.

Çапах та палăртас пулат: Шота Руставели халăх поезийĕн паха тĕслĕхĕсемпе усă курса, вĕсене хăйĕн поемипе çаплипех кĕртсе хумаст, кăшни, пайне пысăк капăрлăх, вĕрçĕн сăн парса йаратат, илемлетет. Шота Руставели сăввисем халăх хушшине сарăлса, унăн фольклорне пуйанлатнă. Поетăн çав тери паха пултарулăхĕ малалахи сырулăхпа литературинче нихăçан та сухалма пултарман пысăк йĕр хăварнă. Поетсем, йурăçăсем, йумахçăсемпе импровизаторсем хушшинче нумайĕшĕ ун йевĕрлĕ сырма тăрăшнă. Грузи çĕршывĕн кашни кĕтесĕнчех — ĕçкĕре те, çавăн пекех уйхир ĕçĕсене тунă çĕрте те, чаплă поетăн сăввисене йурлание илтме пулат. Акă, сăмахран, Шота Руставелин поеминчен илнĕ „Застольная", „Жизнь — сумрак", „Зима погубила розу", „Я Руставели", „Розу спросили", „Мравал — жамиер" сăввисене пур çĕрте те йурлаççĕ. Поетăн чаплă сăввисем пĕтĕм халăхăн пуйанлăхĕ пулса тăраççĕ. Нумай сыпăкĕсем вăхăт шунă май, поемăн тĕп сÿжетĕнчен уйăрăлса кайса, хăйне уйрăм йурламала пулса тăнă. Ун пек йурăсен шутне „Юноша и тигр", „Нестан Дареджани", „Авдандил пошел на охоту" т. ытти сыпăксем те кĕреççĕ. Поетăн сăввисемпе афорисăмĕсем халăх сăмахлăхĕпе йалипе ĕмĕрлĕхех кĕрсе йулнă.

Сырулă истори Шота Руставели çинчен шарламаст, анчах Грузи халăхĕн фольклорĕ унăн йатне пысăк чап вырăнне хурса упрат.

Пирĕн алăра халăх хушшинчен илнĕ хаклă биографи пур, вăл поетăн сăн-сăпатне, пурнăçĕпе ĕçĕсене тĕрĕс кăтартса парат. Тĕп сынписем хăйсен вăхăтĕнче çак пысăк пултарулăха, тĕне хирĕçле произведени тесе сунтарса пĕтернĕ. Анчах Грузи ĕçхалăхĕ çав аслă произведенине тата ăна сыраканăн йатне те хаклă йапала вырăнне хурса пайанхи куна илсе çитерчĕ.

Поетăн хăйĕн пурнăçĕ çинчен калакан халăх хушшинче упранă сведенисем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Кăçал çулла Шота Руставели йачĕпе тăракан ăслăлăхпа тĕпчев институчĕн фольклора тĕпчекен експедицийĕ Месхет-Джавахетире Руставелин пурнăçне вĕренме пит те кирлĕ паха материалсем нумай тупнă. Експедици XII-мĕш ĕмĕрти Грузи культура тĕлĕшĕнчен чи малта тăнă районĕнчи халăх творчествине, Шота Руставели çинчен калакан культурăпа материаллă палăсене тĕпчене, литературăна, фольклора, материаллă культурăпа чĕлхене, живописпе архитектурă палăрăхĕсене пурне те пĕрле илсе тĕрĕслесе пăхни пире Шота Руставелин биографине пĕркелеме май парат. Ку ĕçре пуринчен ытла фольклор материалĕсем нумай пулăшрĕç. Фольклор материалĕсем кăтартнă тăрăх, поетăн биографийĕ çапла пулса тухат. Шота — Руставели — Руставн (псевдонимне çавăнтан илнĕ) йатлă вырăнта çуралнă. Поетăн ашшĕ Чахруха, Руставине тытса тăнăскер, пултарулă сын пулнă — çавăсем сырнă, сĕнĕç йурăлă йурăса тата сивчĕ сăвăсем çыракан поет пулнине палăрă пулнă. Иосе Батани ятпине „Патарашеци" палĕнче туйра пулнă чухне унăн ывăл çурални çинчен хыпар илет. Çапах та Чахруха туй ĕçкине пулат. Çав ĕçкĕре пулнă феодалсем ăна емел парса вĕлереççĕ. Çапла вара, Шота Руставели хăйĕн ашшĕне пачах курман, çуралсанах тăлăха тăрса йулнă.

Пулас поета паха усерессине Шота Руставелин ашшĕн Тоет монастырĕнче пуранакан шăлнĕ хăй çине илет. Шота малтан Импољри чиркÿ шкулĕнче вĕреннĕ, унта вăл пысăк ÿсĕмсем кăтартнă. Унтан вара, пичĕшĕ амăшĕн тăванĕ патне, Атабег патне, Зарзмăна леçет. Унта Шота виçĕ çул вĕреннĕ.

Шотан пысăк пултарулăхне кура, тăванĕсем ăна Кахетири академине вĕренме асатаççĕ. Унта вăл тăватă çул вĕренет. Академире вĕреннĕ чухне 17—18 çулти Шота паларнă поет вырăнне шутланнă, унăн çархатарлă пултарулăхĕ пурне те тĕлĕнтерçĕ. Пысăк талантлă поет çинчен Тамарă патша патне те хыпар çитнĕ. Хĕрарăм патша Тамарă ăна Грецине йарат. Вăл вăхăтра Грецире кашни çулах 30 çамрăка философине вĕренме йарса тăнă. Грецире Шота Руставели 6 çул пурăннă. Тăван çĕршывне каялла таврăннă чухне вăл 23—24 çулсенче пулнă. Аваллăхран йулнă сăмахсем тăрăх, вăл вăхăт çитиччен хĕрарăм патша Тамарă Грузи престолĕнче 14 çул ларма ĕлкĕрнĕ. Вăл историлĕ палăсем тăрăх, 1198 çулта пулнă. Çапла вара поет çуралнине 1174 çулпа палăă тумала.

Тăван çĕршывне таврăннă хыççăн Шота литературăра ĕçне малала тума тытăнат. Месхетири малта тăракан çамрăксене хăй тавра пĕтĕçтерсе шкул уçат, халăха вĕренме, сутта тухма пулăшат.

Хĕрарăм патша Тамарă Шота Руставелине хăй патне чĕнсе, ăна те патшалăх казначейĕ, те хăйĕн секретарĕ туса, дворецра ĕçлеме илет.

Çав вăхăтра унăн аслă пичĕшĕшĕн Автандилăн инкек пулнă. Автандил хĕрарăм патшана — Тамарăна йуратнă. Хĕрарăм патша ăна килĕштермесĕр, вырăс патшин Георги йатлă ывăлне качча тухат. Хурлăхпа кăмăлĕ хуçăлнă, тарăхса çитнĕ Автандил хăйĕн çĕршывне парахса тухса тарса, урăх çĕре кайнă, чухне çул çинче вилет.

Пиччĕшĕ çапла саранçар вилнипе вилнĕ Шотан „Вепхвис Ткаосани" роман-поемăна сырас шухăшне çуратнă.

Хăйĕн произведенине Шота Руставели хĕрарăм патшана, Тамарăна пехилесе сырнă. Поемăна шорсăра чапăă лару тусса вулăнă. Пысăк пултарулăхпа сырнă произведени пурне те тĕлĕнтернĕ. Хĕрарăм патша хăй те ăна ăшă кăмăлпа йышăнат. Çакă çĕнтерÿпе çунатланнă поет хăйне пит телейлĕ пек туйса илет.

Çав вăхăтра Тамарă патша хăйĕн упăшкине, Георги патшана Грузи çĕршывĕнчен хăваласа кăларса, тахçанах Шота Руставелине килĕштернĕскер, ăна хăйĕн арăмĕпе—Нино Тмогвелипе уйăрласа, хăйпе мăшăрланма хушат. Анчах Шота хĕрарăм патшан сĕнĕвĕне килĕшмест. Поет хăйĕн сĕнĕвĕне килĕшменнишĕн кÿреннĕ Тамарă Шотана Грецие хăваласа йарат.

Грузи ĕçхалăхĕ поетăн пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен пысăк йуратупа, аслă кăмăлпа каласа парат. Унăн пурнăçĕнчи кашни палăрах вырăнĕ пирки тĕрлĕ варианталла каласусем çÿреççĕ. Епĕр вĕсенчен пĕрине, тĕплĕрех каласа паракан вариантне çеç илсе кăтартрăмăр.

Руставели пултарулăхне Сталинла тапхăрти пек, социализăм тапхăрĕнчи пек, нихăçан та таранăн, пысăк йуратупа, тĕплĕн тĕпчемен. Халĕ кашни колхозник, кашни рабочи тата кашни интеллигент семйинче Шота Руставели йатне асăнаççĕ. Ĕлĕк халăхăн ĕç-танне [...] çĕрĕмĕне антратса пурăннă ирсĕр сынсем—духовенствăпа дворянство Руставелин произведенине „христианствăна пăрат" тесе халăх хушшине сарма чарнă, вута хурса çунтарнă. Халĕ ĕçсынисен сарлака массисем çав аслă произведение калама çук пысăк интереспе вулаççĕ, вĕренеççĕ. Халăх хушшинчи йумахçăсемпе йурăçăсем аслă поет çинчен сĕнĕрен çĕнĕ сăвăсемпе йурăсем кĕвĕлесе, „чонгури" аккомпанеменчĕпе йурлаççĕ. Акă ун пек йурăсенчен пĕри, ăна Грузинче пур çĕрте те йурлаççĕ:

Слово твое храним и лелеем
с любовью,
Слово, что вновь облекается плотью
и реками,
Слово твое мы поем колоналам
и рекам
Шота великий,—великим прославленный веками.

Тĕрлĕрен пайă йатсенчен пĕри— „Витязь в тигровой шкуре".

Советăн паттăр разведкине пĕтĕм халăх саламлат

Совет Сойузĕнчи мĕлйуншар ĕççыннисем ВЧК—ОГПУ—НКВД çирĕм çул тултарнă мухтавлă праçнике чаплă митингсемпе, пухусемпе, вечерсемпе паллă турĕç. Пирĕн çĕршывăн мĕн пур халăхĕсем мухтавлă чекиссене тата вĕсен мухтавлă руководителне, сталинла Наркома, ĕççыннисем йуратакан Николай Иванович Йежова саламласа сывлăх сунчĕç.

Шалти ĕççен Халăх Комиссариачĕн разведкăлă-каратељнăй оргăнĕсен йубилейĕ пĕтĕм халăх праçникĕ пулса тăчĕ. Тăван çĕршывăн патриочĕсем—рабочисем, хресченсем, совет интеллигенцийĕ Шалти ĕççен Халăх Комиссариатне унăн боецĕсемпе командирĕсен хăйулă та паттăрла ĕçĕсемшĕн хăйсем мухтаса тав тунине кăтартрĕç.

Кийевра чаплă праçник кунĕнче Украина К (б)Партин Тĕп Комитечĕн секретарĕ С. В. Косиор йулташ тата Украина ССР ĕн Шалти ĕççен Халăх Комиссарĕ Леплевский йулташ правителствăн чи кирлĕ заданийĕсене кăтартулă тата хăйулă пурнăçа кĕртнĕшĕн ССР Сойузĕн орденĕсемпе наградăланă Шалти ĕççен Халăх Комиссариат работникĕсен ушкăнĕсене йышăннă. Йышăнура Косиор йулташ наградăланисене праçник йачĕпе тата пысăк наградă илнĕ йатпа сывлăх суннă. Косиор йулташ вĕсене социалисăмлă тăван çĕршывшăн хăйулă ĕçлессинче, халăхсен тăшманĕсемпе кĕрешессинче малашне те çитĕнÿсем тума суннă. Йышăнура пулнисем Косиор сăмахне хĕрÿлĕн йышăннă.

(ТАСС).

Мускаври стахановецсен пуçарувĕ çĕршыв талкăшĕпех анлăн саралнă

Совет Сойузĕнчи фабрикăсемпе заводсенче Мускаври стахановецсем чĕнсе каланине сÿтсе-йавма пухăннă рабочисен пухувĕсем пысăк çĕкленÿпе иртеççĕ.

Донбасри „Артемугољ" тресчĕн горњакĕсем Мускаври стахановецсен сĕнÿне хĕрÿлĕн ырлаççĕ. Вĕсем стахановла рекордсен сталинла уйăхлăхне пĕр шухăшлăн хутшăнма йышăннă.

Горњаксем 1938 çулхи йанвар уйăхĕнче—сталинла виççĕмĕш пиатилеткăн пĕрремĕш уйăхĕнче пĕрмайах пысăк тухăçпа ĕçлеме, пур шахтăсенне те кăмрăк кăларас плана кунран кун ытлашшипех тултарма, талăкра 20.500 тоннăран кайа мар кăмрăк кăларма пулаççĕ.

Мускаври стахановецсен чĕнÿвĕ Совет Сойузĕнчи фабрикăсемпе заводсенче производствăлă çĕнĕ çĕкленÿ турĕ.

Ленинградри „Бољшевик" заводра декабĕрĕн 19-мĕшĕнче заводри çĕршыв рабочисем нормăнă 200 процент ытла тултарнă. Çамрăк строгатељщица Стасова йулташ, пĕр вăхăтрах икĕ станокпа ĕçлекенскер, пĕр станокĕ çинче плана 260 процент, теприн çинче—210 процент тултарнă. (ТАСС).

ССР Сойузĕн Аслă Совет депутатне Н. А. Изотов йулташа ĕнентерÿ пани

ДОН ÇИ РОСТОВ, декабĕрĕн 21-мĕш. (ТАСС). Ростов суйлав округĕн суйлав комиççин ларувĕнче „Шахтантрацит" тресчĕн управљайушчине, Н. А. Изотов йулташа, хăйне ССР Сойузĕн Аслă Совет депутатне суйлани çинчен ĕнентерÿ панă.

Изотов йутлаш ĕнентерÿве илсе çапла каланă:

— Суйлавçăсем пысăккăн шаннине епĕ кăмрăк тупас плана иртерсе тултарнипе тÿрре кăларатăп. Кăçалхи сĕнтабĕр уйăхĕнче епĕ „Шахтантрацит" трестне йертсе пыма йышăнтăм. Ку трест чи кайа йулнă трест пулнă. Кунта уйрăмах халăх тăшманĕсем—фашиссен троцкисла-бухаринла сутăнчăксем сăтăрланă. Халĕ трест плана тултарма пуçларĕ, талăкра кăмрăк кăларассине 10.300 тоннăран пуçласа 14.000 тоннăна çитиччен тата ытларах та ÿстерчĕ. Епĕр—ку сахал тесе шутлатпăр. Епĕр çĕршыва кăмрăк тата ытларах памала, пама та пултаратпăр.

Совет Сойузĕ тăрăх

★ **Ачасен çĕнĕ комбиначĕ.** Кара-Богаз-Голара (Туркмени ССР) ачасем валљи çĕнĕ комбинат уçнă. Икĕ хутлă çуртсенче ача сачĕ тата ача йасли тунă. Пÿлĕмсене çутă, лайăх туса хатĕрленĕ.

★ **Вăйлă çĕр чĕтренĕ.** Декабĕрĕн 18-мĕшĕнче Ташкентра выранти вăхăтпа каçхине 8 сехетре питĕ вăйлă çĕр чĕтренĕ. Епицентрта çĕр чĕтренин вăйĕ 8 балл пулнă. Çав кунах тата Чикментре (Казах ССР) çĕр чĕтренĕ. Чылай çуртсем çуралнă тата штукатуркăсем ишĕлнĕ.

★ **200 пианино.** Борисоври Молотов йачĕпе тăракан комбинатри пианино цехĕ 200 пианино туса кăларса çулталăк планне срукчĕнех тултарнă. Йăвăç инструментсен цехĕ 25 цимбало туса кăларнă, вĕсене Белоруссии филармонийĕ сутăн илнĕ. Пианино цехĕ çулталăк иртнĕ çĕре планран ытлашши тата 15 пианино туса кăларма пулнă.

★ **Украинăра совет влаçĕ пулнăранпа 20 çул тултарнă йатпа** Кийеври заводсенче, фабриксенче тата учрежденисенче докладсем тата калаçусем пулаççĕ. Чылай заводсенче парткабинетсем выставкă уçаççĕ. Кийев хулинчи пур клубсенче те чаплă вечĕрсем, концертсем пулаççĕ.

★ **Улан-Удери пурăнмали çуртйĕр строителстви. Бурйад-Монголин столицин** Улан-Уде—ĕлĕк таса мар Верхнеудинск хули пулнă. Хаљ вăл пĕр майах лайăхланса пырат, чылай пурăнмали çуртсем тунă. Инженерлă-техникăлă работниксем валљи тунă 14 хватерлĕ çурт тата рабфак студенчĕсен общежитийĕ пуринчен те ытларах илемлĕ. Çитес вăхăтра унта водопровод тума тытăнаççĕ.

Испанири фронтсенче

ЎКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: клиникă бољницин çурчĕ, фашиссен Мадрид патĕнчи чи çывăх пусăмĕ. Республика çарĕсем çак çурт фашиссен позиципе тытакан çыхăнува татнă.

(Сойузфото).

Декабĕрĕн 25-мĕшĕнче Францири компартин сиесĕ уçалат

Парижрен пĕлтернĕ тăрăх, декабĕрĕн 25-мĕшĕнче Францири компартин черетлĕ сиесĕ уçалат.

Иртнĕ çулхи йанвар уйăхĕнче пулса иртнĕ парти сиесĕ парти умне: ĕççыннисене çăкăр, ирĕклĕх тата мирлĕ пурнăç тупса пама Франци халăхне пĕрлештермеле, тесе задачă лартнăччĕ. Сиес коммуниссене фашисăма хирĕçле халăх фрончĕн пĕрлĕхне тата пĕтĕçсе танине тĕреклетме хушса хăварнă.

Çав сиесăн решенийĕсене пурнăçа кĕртсе, 1936 çулта парламента суйламали суйлав кампанине коммуниссем мĕн пур фашисăма хирĕçле тата демократилĕ вăйсене пĕтĕçтермели лозунгсемпе иртернĕ. 1934 çулхи парламент суйлавĕнче парти 705.744 сасă илнĕ пулсан, çак суйлавра Франци компартийĕ 1. 502. 404 сасă пухнă. 1936 çулхи суйлавра çĕнтернине пула компартин парламентри депутачĕсен хисепĕ 10 çын пулнă çĕртен 72 çынна çитнĕ. 1937 çулхи август уйăхĕнче парламента Сен Денире хушса суйланă чухне (Парижăн рабочисем пурăнакан пайĕ) парти çĕнĕ çĕнтерÿ тунă, унта коммунисла депутат суйланă, хăйĕн кандидатурине тăратма хăтланнă фашис Дорио суйланмасăрах йулса намăс курнă. Çапла вара халљхи вăхăтра Франци парламенчĕн коммунисла фракцийĕ 73 депутатран тăрат. Сенатра (парламентăн иккĕмĕш палати) коммуниссен хăйсен икĕ представител пур.

Халăх фрончĕн программине пĕтĕмпех пурнăçа кĕртессишĕн, рабочи клас пĕрлĕхĕшĕн, Франци пролетариачĕн пĕрлĕхлĕ революцилĕ партине тăвассишĕн, рабочисемпе хресченсен массисен пурнăçне лайăхлатассишĕн компарти ырми-канми çине тăрса кĕрешсе пынă, халĕ те çавăн пекех кĕрешет.

Францири коммунисла партин авторитечĕ ÿсни унăн составĕ хисеп йенчен ÿснипе килĕшсе пырат. 8-мĕш сиес тĕлне партин 86 902 член пулнă пулсан, халĕ унăн 340. 000 член ытла шутланат.

Кăçалхи октабĕр уйăхĕнче пулса иртнĕ кантон суйлавĕсен (выранти самоуправлени оргăнĕсене суйлани), (итогĕсем компарти влийанийĕ ÿсе пынине çирĕплетсе пачĕç.

Коммунисла партине йуратни ÿссе пынине кăтартса паракан сенчен пĕри вăл—партин тĕп оргăнĕн „Йуманите" хаçат тиражĕ пулса тăрат. 1935 çулта хаçатăн кăшни кунхи вăтам тираже 217.850 екземпљар пулнă çĕртен кăçал 425. 605 екземпљара çити ÿснĕ, йулашки кунсенче хаçат тиражĕ пĕр мĕлйун екземпљара йахăн çитнĕ.

Çĕршыв тулашĕнчи политикă йенĕпе илсен, компарти малтан та халĕ те миршĕн, фашисла вăрçă чĕртсе йаракансене хирĕç кĕрешет. Франци компартийĕ, уйрăмăн илсен, Испани ĕçне „хутшăнмала мар" тесе калакан политикă аркансa кайнине ырми канми тăрă шыв çине кăларса пырат. Вăл Испанин саккунлă республикăлă правителствине фашисла пăлхавçăсене çĕнтерме урăх çĕршывсенчен хĕçпăшалсемпе çар хатĕрĕсем илме май туса пама ыйтат.

(ТАСС).

2.500 тенкĕлĕх хаçат-журнал сарнă

ИШЛЕЙ. Хаçат-журнал сарас ĕçре Тивĕшри почтă агенстви районта иккĕмĕш выранта тăнă пулсан, 1938 çулта пĕрремĕш вырăна тухрĕ. Агенствăна кĕрекен йалсенче çĕнĕ çулшăн пĕтĕмпе 2.500 тенкĕлĕх хаçат-журнал çырăнтарнă. Хаçат сарас ĕçре Соловйова йулташ уйрăмах тăрăшса ĕçлерĕ. Йанварĕн 1-мĕшчен татах 500 тенкĕлĕх саратăп,—тесе калат вăл.

М. Сорокин.

ТЕМТЕПĔР

Хаклă йăвăççем

Сухумири Ботаникă сатĕнче конфет йăвăççисем пиççе çитнĕ. Вăл йăвăçăн çимĕçне мар, а курланкине çийеççĕ.

Ăвăс (воск) йăвăççисем çулçă тăкма пуçланă. Вăл йăвăçăн вăрлăхĕнчен ăвăс тăваççĕ. Ăна лабораторире сăнаса пăхсан, 20 процента çити лайăх ăвăс тухни палăрнă.

Сатри аслăлăх работникĕсем питĕ хаклă лак йăвăççин вăрлăхĕсене пухса, лартма хатĕрлесе хунă. Ун пек йăвăççем Йапонире, Китайра тата Гималайра çĕс ÿсеççĕ. Çав йăвăçран тунă лака кислота, спирт тата еир та сийенлеймест, хытса ларсан вăл нумай çулчен çапçутă тăрат.

Ботаникă сатĕнче тата хут йăвăççин вăрлăхĕсене пухса хатĕрленĕ. Вăл йăвăç хуппинчен укса тумали йака хут, пергамент тата искуственнăй ÿт тăваççĕ. Çав сатрах тата „волшебный орех" çитĕнет. „Волшебный ореха" шыв çине йарса лартсан, вăл шыв йун йухнине чарат.

(„Заря Востока").

●

Хĕвелтен пĕр мĕлйард та виççĕр мĕлйун хут пысăкрах çăлтăр

Ленинградри астрономи институчĕ Америкăри Гарвордски обсерватори „VV Цефея" йатлă çăлтăра сăнаса пăхни çинчен пĕлтерÿ илнĕ. Вăл уçăлăхри пур çăлтăрсенчен те пысăкрах.

Халиччен Антарес йатлă çăлтăр чи пысăк çăлтăр шутланнă, вăл хĕвелтен 400 мĕлйун хут пысăкрах. Нумайах пулмасть Гарвордски обсервтори „VV Цефея" йатлă çăлтăр халиччен тĕпчесе вĕреннĕ пур ытти çăлтăрсенчен те пысăкрах пулнине пĕлнĕ. Вăл хăйĕн калăпăшĕпе хĕвелтен пĕр мĕлйард та виççĕр мĕлйун хут пысăкрах, йапаласен (вешчество) хисепĕпе —40 хут çеç пысăкрах. Ку вăл унти йапаласем питĕ сапаланчăк пулнинчен килет.

Çак интереслă çăлтăра хаљ Ленинградри астрономи институчĕ те тĕпчесе вĕренет.

(„Правда").

●

Ата-пушмак çĕлекен комбайн

Тбилисири рабочи-изобретател Карагезйан „ата пушмак çĕлекен комбайн" прийектине туса хатĕрленĕ. Комбайнра пурĕ 27 машинă пулат тата вăл пĕтĕмпех конвейерпа ĕçлет. Комбайн стандартлă ата-пушмак çĕлес ĕçе пĕтĕмпех механизацилет. Çак изобретени питĕ нумай економи парат, ăна тирсăран промышленнăçĕн Тĕп управленийĕ ырланă.

(„Вечерний Тбилиси").

Пирĕн консултаци

Ыйту. Хĕлле, уйар сивĕ çанталăкра, мĕншĕн хĕвел виççĕ пек курăнат.

Мих. Гаврилов, Йетĕрне р., Алексейевкă й.

ОТВЕТ. Витĕр курăнакан йапаласем тăрăх пынă чухне çутă пайăркисем тÿрех пыраççĕ. Витĕр курăнман йапаласем çумне перĕнсен, çутă пайăркисем тÿрĕ линирен пăрăнаççĕ, вĕсем витĕр курăнман йапалана перĕнеççĕ те урăх йеннеле кайаççĕ. Витĕр курăнман йапалан çийĕ йака пулсан, çутă пайăркисем тепĕр йеннеле хăйсен йĕркисене пăсмасăрах кайма пултараççĕ. Çакăн пек йака çийĕлĕ йапаласене тĕкĕр (зеркало) теççĕ. Çутă пайăркисем тĕкĕр çине ÿкнĕ чухне епĕр çутă пайăрки паракан йапалана тÿрех те куратпăр, тата тĕкĕрте унăн сăнне те куратпăр.

Таçта инçетре тăракан йапаласем сывлăш витĕр аван курăнаççĕ. Анчах хăш чухне сывлăшăн сийĕсем пĕр пек пулмаççĕ. Кун пек чухне çутă пайăркисем пĕр сий сывлăшран тепĕр сийе кĕнĕ чухне хăйсен тÿрĕ çулне кăштах хуçаççĕ, йе тепĕр сий çийĕнчен çапăнса кайаççĕ. Çакăн пек чухне вара епĕр айакри йапаласене тÿрех те, тата вĕсен сăнĕсене тĕкĕрсем çинче курнă пек куратпăр.

Хĕлле сивĕ ирхине хĕвел çутин пайăркисем хăшĕ пире тÿрех курăнаççĕ. Уптан тата айкинеле кайакан çутă пайăркисем сывлăшăн кăшт урăхларах сийне лексе тÿрĕ çулран пăрăнса, пирĕн куçа лекеççĕ. Çак айкинеле пăрăннă пайăркасем пирĕн йеннеле пынă çĕрте епĕр тата хĕвел куратпăр.

Сывлăш сийĕсем хăш чухне çутă пайăркисене тÿрĕ çултан пăрса йарса тĕкĕр йевĕрлĕ пулнине тата мираж текенсенчен лайăх пĕлме пулат.

Миражсем ăшă çанталăк пулакан вырăнсенче: Вăтам Азире, Сахарă пушă хирте час-часах пулаççĕ. Мираж чухне таçта инçетре тăракан йапаласем, ахаљ чухне курăнмансkерсем ,чылай çывăхра курăнаççĕ. Пушă хирте пыракан çынсем хăйсенчен инçе те мар хуласем, вăрмансем, тинĕссем кураççĕ.

Ф. Кузьмин.

Пĕлтерÿ

Чăваш республикинчи Културăн Аслăлăхпа Тĕпчев Институчĕ „Чăваш Коммунĕ" тата „Красная Чувашия" хаçатсен редакцийĕсемпе тата Чăваш Совет писателĕсен Сойузĕн правленийĕ пĕрле, декабĕрĕн 27 мĕшĕнче, Пичет çурчĕн хĕрлĕ кĕтесĕнче Чăваш правописанин правилисем çинчен канашлу иртерет. Канашлăва аслăлăх работникĕсене, пичет работникĕсене чĕлхе çинчен вĕрентекенсене, студентсене тата пур интереслевекенсене те чĕнет.

Канашлу каçхине 6 сехетре пуçланат.

Културăн Аслăлăхпа Тĕпчев Институчĕ.

Ответлă редактăр заместителĕ И. П. ПАВЛОВ—ПИНЕР.

ПĔЛТЕРНИ

Чăваш аероклубĕ çумĕнчи вĕçев шкулĕпе авиомотористсен шкулне производствăран татăлмасăр вĕренме кĕме зайавленисене 1937 çулхи декабĕрĕн 29-мĕшчен илеççĕ.

ВĔРЕНМЕ КĔМЕЛИ УСЛОВИСЕМ

Вĕренме кĕрекенсем 16 çултан пуçласа 22 çула çитнисем, 7 çултан кайа мар вĕреннисем пулмала.

Зайавленисемпе пĕрле çак документсене тăратмала:

1) Миçе çул вĕреннине кăтартакан справкă,
2) Мĕнле социаллă сийрен тухнине кăтартакан справкă,
3) Ĕçленĕ вырăнтан панă справкă,
4) Ĕçленĕ вырăнтан панă характеристикă тата
5) Автобиографи.

Зайавлени панисен мандат комиççипе врачсен комиççинче пулма декабĕрĕн 23, 26, 27 тата 29-мĕшĕсенче ирхине 10 сехет тĕлне аероклуба пымала. Айакран килнисене çул укçипе хватер укçи тÿлемеççĕ.

Вĕренÿ условийĕсем çинчен аероклубра пĕлме пулат.

Адрес: Шупашкар, аероклуб.

Аероклуб начаљникĕ СМИРНОВ.

Шупашкарти „Пекарь" ертели йалан ĕçleme

БУХГАЛТЕР

тата вăхăтлăх ĕçлеме

КАРТОТЕТЧИК

васкавлă кирлĕ

Ĕçукçи килĕшÿ тăрăх.

ШУПАШКАРТИ ТУБЕРКУЛЕЗ ДИСПАНСЕРНЕ

врачсем, бухгалтер, сестрасем, санитаркăсем тата аслă сестра

КИРЛĔ

Адрес: Чувашскайа урамĕ, 10.

Административлă учреждениесенчи Работниксен Сойузĕн Тĕп Комитечĕн Чăваш А.С.С. Республикĕнчи **ОРГБЮРОНЕ** (Професçа Сойузĕсен Пĕтĕм Сойузри Тĕп Совечĕ 1937 çулта нойабĕрĕн 21-мĕшĕнче йышăннă постановлени тăрăх)

ПĔТЕРМЕЛЕ ТУНĂ

Учрежденисен тата уйрăм çынсен претензисем пулсан, 1938 çулхи йанварĕн 5-мĕшчен ликвидкома пĕлтермеле.

ЛИКВИДКОМ.

Шупашкарти електростанци

пур предприйатисене, учрежденисене тата организацисене кăçалхи декабĕрĕн 25-мĕшĕччен

електроенерги моторсене валљи тата çуртсене çутатма мĕн чухлĕ кирлĕ пуласси çинчен, кашни квартăлшăн уйрăм кăтартса

зайавкăсем тăратма ыйтат

Зайавкă паманнисем 1938 çулта електроенергипе усă кураймаççĕ. 3—0

ТАВАР ИЛĔКЕНСЕНЕ! АЧАСЕНЕ!

Чебторгăн промтаварсен, хуçалăх таварĕсен магазинĕсенче тата —— КУЉТМАГРА ——

ЙОЛКĂ ИЛЕМЛЕТМЕЛИСЕМ АЧА-ПĂЧАСЕМ ВАЉЉИ АТĂ-ПУШМАКСЕМ

пур тĕрлисем те сутлăх пур.

Ачасем валљи выљамалисем, пилкăсем, рубанкăсем, стољар приборĕсем, пистончиксем, сумкăсем тата ыттисем те пур.

Искусотвеннăй пальмăсем, гитарăсем, балалайкăсем, байансем, билиарасем, йĕлтĕрсем, шахмăтсем, шашкăсем, мрамăртан тата пластмассăран тунă черниа приборĕсем тата ыттисем те.

СИМĔС ПАСАРТА: ачасем валљи выљамалансем йупалĕ хакпа килнĕ: 10 пусран пуçласа 15 тенке çитиччен.

4-мĕш номĕрлĕ магазинта (ĕлĕк „Комсомольский" магазин пулнă) тата йешĕл пасарта пĕчĕк йолкăсене 3 тенке, пысăккисене—4 тенке СУТАÇÇĔ.

ЧЕБТОРГ ДИРЕКЦИЙĔ.

„Ленин в Октябре" кинофиљм куртăмăр

...Çутă сÿнет те, екран çинче сăнсем, картинăсем курăнса кайаççĕ. Питĕр хулинче тĕтрелĕ кун. Полицейскисем, сыщиксем кĕшĕлтетсе çÿреççĕ. Кашниннех документсем тĕрĕслеççĕ.

Çав вăхăтрах Питĕре Финљанди чиккинчен пойăс васкаса килет. Паровоз çинче пытанса Ленин Питĕре килет. Ленина сыхлама Парти Тĕпкомĕ Василий рабочийе хушнă. Вăл паровоз çинче Ленинпа пĕрле тăрат. Пойăс чаранат, полицейскисем пассажирсен докуменчĕсене тĕрĕслеççĕ. Вăхăтлăх правителствă „пуçĕсем" Ленина шыраççĕ. Пĕччен паровоз çухартса, пăс кăларса депо патнеле кайат. Паровоз çинчен Ленинпа Василий тухаççĕ.

Ленин хватерте. Вăл работница патне вырнаçат.

Ленин салтăнма та ĕлкĕреймест, Василийе çапла калат:

— Чи малтанах Сталина курассине асту.

Ленинпа Сталин—парти çулпуçĕсем—тăватă сехет хушши калаçаççĕ. Ленин Сталина пуринчен хыта шанат, унпала пĕрле вĕсем Октабĕр восстанине тума хатĕрленеççĕ. Василий вĕсен пурнăçне хыта сыхлат.

Бољшевиксем, Ленин йертсе пынипе, Октабĕр штурмине хатĕрленеççĕ.

Октабĕрĕн 10-мĕшĕнче çĕрĕпех парти Тĕпкомĕн ларувĕ пырат. Ларура Ленинăн çывăх йулташĕсем: Сталин, Свердлов, Дзержинский. Ленин хĕçпăшаллă восстанине тухмали çинчен хĕрÿлĕн калат. Тĕпком восстани тума йышăнат. Ылханлă тăшмансем—Каменевпа Зиновйев—Ленина хирĕç пыраççĕ.

Лару пĕтет. Сталинпа Дзержинский Ленина ăсатаççĕ. Василий рабочи Ленина хăй хватерне илсе кайат.

Василий арăмĕ Ленина паллаймаст. Анчах вăл Ленин çинчен илтнĕ. Хăйĕн хватерĕнче халĕ унпа Ленин калаçнине пĕлмест вăл.

Василийпе арăмĕ Ленина хăйсен вырăнĕ çине выртма хушаççĕ. Ленин килĕшмест, урайĕнче çывăрат. Василий арăмĕ ку çын Ленин пулнине тин пĕлет...

Ленин пурăннă хватере Василий хаçатсем илсе килет. Ленин вулат. Вăл Каменев ес-ерсен хаçатĕнче çырнă тăшманла статйана курат. Кунта Каменев парти ĕçне сутат, партин вăрттăн решенийĕ çинчен тăшмансене пĕлтерет. Ленин тарăхса, çиленсе кайат. Ленин вĕсене бандитсем, идиотсем тесе вăрçат.

Владимир Илйич Василийе Сталин патне йарат:

— Халех Сталин тата Свердлов патне кайăр. Калăр, манăн вĕсене халех курмала, халех. Кайăр, хăвăртрах кайăр.

Ленин пÿлĕмре тарăхса çÿрет. Вăл бољшевиксен партийĕн членĕсем патне çыру çырат.

Çырăва рабочисем вулаççĕ. Вĕсем икĕ питлĕ Каменевпа Зиновйева сивлеççĕ, вĕсене намăслантараççĕ...

Ленин каллех Сталинпа, Свердловпа, Дзержинскийпе калаçат. Вăл Каменевпа Зиновйева халех партирен кăларма хушат.

Парти Октабĕр штурмине хатĕрленет. Ку ĕçпе йертсе пыма парти хăйĕн членĕсене—Сталина, Свердлова, Дзержинскийне уйăрат. Парти хăйĕн членĕсене рабочисем патне йарат. Рабочисем хаваслансa хатĕрленеççĕ...

Мењшевикла правителствă революцине пĕтерсе хурасшăн, Ленина вĕлересшĕн. Сталина, Свердлова вĕлересшĕн...

Рабочисем, салтаксем парти сигналне, штаб приказне кĕтеççĕ. „Аврора" карап çинчи морйаксем офицерсене вĕлереççĕ. „Аврора" революци майлă тăрат.

Полицейскисем Ленина шыраççĕ. Ака машинă çине ларса вĕсем Ленина арĕслеме кайаççĕ. Шофер ун çинчен пĕлет. Вăл машина пăсат, Ленин патне кайакан полицейскисене вăхăтлăха чарат. Вăл Лениншăн, революцишĕн вилет.

Василийпе Ленин штаба кайаççĕ. Питĕр хули тапраннă. Питĕр вăрçат, çапăçат.

Ленин Зимний двореца илме васкатат. Рабочисем, салтаксем матроссем дворецa кĕрсе кайаççĕ. Вырăс капиталисăмĕн йулашки шанчăкĕ пĕтет...

Ленин рабочисемпе салтаксем умĕнче хĕрÿлĕ сăмах калат. Ленина пĕтĕм халăх хытă алă çупса кĕтсе илет. Пиншер çынсем Ленина пĕрремĕш хут кураççĕ, вĕсем йуратнă çывăх çулпуçне саламлаççĕ.

Революци пулчĕ. Влаç рабочисемпе хресченсен аллине куçат, Российă çĕнĕ çулпа кайма пуçлат. Ленин йертсе пыракан пролетариат пĕтĕм Российăна çĕнĕ штурма илсе кайат.

Çакăн пек „Ленин Октабĕрте" кинофиљмăн содержанийĕ.

Картинă калама çук чаплă, вăйлă. Совет кино работникĕсем калама çук пысăк çĕнтерÿ турĕç. Ĕçхалăхĕ чаплă, историлĕ фиљм тăвакансене саламлат. Сценарист Каплер, режиссер Ромм, оператор Волчек, ССР Сойузĕн тава тивĕçлĕ артисĕ Шчукин тата пур артиссем те мухтава тивĕç.

Кинофиљма Мускав хапăлласа йышăнчĕ. Картинăна пăхнă чух вĕçĕмсĕр алă çупни илтĕнет. Халăх Ленина, Сталина алă çупса саламлат.

Сталин пуçарнипе ÿкернĕ кинофиљм кашни ĕççыннинех Ленин пек, Сталин пек бољшевиксем пек пулма чĕнет.

Епĕр, Мускаври Хĕрлĕ йалавлă Пролетари дивизинчи красноармейцсем, Чăваш республикĕн ывăлĕсем, „Ленин Октабĕрте" кинофиљма пысăк хаваслăхпа куртăмăр. Епĕр Ленин пурнăçĕпе, унăн чаплă ĕçĕпе паллашрăмăр. Кинофиљм пире тăван çĕршыва тата лайăхрах сыхлама, йуратма чĕнет. Фиљм пире çынна, чи хаклă капитала, йуратма вĕрентет. Ленин пысăк, историлĕ ĕç тунă чух та, сынсемшĕн тăрăшма манмаст. Вăл Василийе кăнма хушат, уншăн тăрăшат. Фиљм тăшмансем çине курайманлăхпа тарăхма вĕрентет, вĕсемпе хăйаррăн кĕрешме чĕнет.

Епĕр, Хĕрлĕ çар бойецĕсем, Ленин—Сталин ĕçĕшĕн вилме те хатĕр. Епĕр шофер вилнĕ пек, тăван çĕршывшăн пайанах кирек те мĕнле йăвăр задание те пурнăçа кĕртме пултаратпăр.

Ку кинона епĕр нихăçан та манас çук. Чăваш республикĕнчи рабочисене, колхозниксене, интеллигентсене „Ленин Октабĕрте" фиљма курма сенетпĕр.

Чăваш красноармейцсем:

Йев. Йефремов, Ник. Алендейев, Фед. Кудрйавцев, Леонтйев, Йардков, Йевдокимов.

„Чăваш Коммунĕ" çыранса илмели хаксем; 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 5 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăвĕсене кайала памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 982. Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 2370. Тираж 13790. 53—52 см. 1—1 л. п.